Чебоксары
Ц. Б. им. Горького

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 МАРТ 3 КĔÇНЕРНИКУН
50 (4863)-мĕш №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

ЙАЛХУÇАЛĂХĔНЧИ МАЛТА ПЫРАКАНСЕН РЕСПУБЛИКĂРИ СЛЬОЧĔ

ССРС Верховнăй Совет депутачĕ Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ Л. С. СПАСОВ йулташ сльот уçнă чухне каланă сăмах

Йулташсем, пайан пирĕн Чăваш республикĕнче пит пысăк паллă ĕç пулса иртет. Парти Обкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ чĕннипе, республикă столицине пирĕн колхоз хресченĕсен чи лайăх представителĕсем, пирĕн большевикла парти пăхса ÿстернĕ çын сем, колхоз уй-хирĕсенчи стахановцăсем, колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекен маçтăрсем, чи лайăх трактористсемпе трактористкăсем, чи лайăх комбайнерсемпе комбайнеркăсем,—пирĕн социалисăмла çĕрĕçĕнчи йатлă çын ем пухăнчĕç. Сльота пирĕн малта пыракан агрономсемпе зоотехниксем те килчĕç. Çак сльота райçĕрĕç пайĕсен пуçлăхĕсем, МТС директăрĕсемпе аслă агрономĕсем пурте пухăнчĕç. Епĕр чĕннипе пирĕн республикăри сльота хаклă хăнасем—Тутар республикĕпе Мордва республикĕнчи колхозсенчен представителсем килчĕç. (Алă çупаççĕ)

Парти Обкомĕпе Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ хушнипе сире пурне те хĕрулĕн саламлатăп тата сирĕн урлă пирĕн орденлă Чăваш республикĕнчи мĕн пур колхозниксемпе колхозницăсене большевикла хĕрÿлĕ салам йаратăп. (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Йулташсем, епĕр сире кунта пирĕн республикăри мĕн пур колхозсен иртнĕ 1937 çулхи ĕçĕсене пĕтĕçтерсе тухма тата иккĕмĕшĕнчен, стахановла 1938 çулта тăракан задачăсем çинчен сÿтсе-йавма чĕнсе илтĕмĕр.

Йулташсем, есĕр çак канашлува пухăннисем, 1937 çулта пысăк тухăçлă тырпулшăн кĕрешсе калама çук пысăк ĕç турăр. Есĕр активлăн ĕçленипе, есĕр хăвăр хутшăнса ĕçлесе организацилесе пынипе пирĕн социалисăмлă Чăваш республикĕнчи колхозсем иртнĕ çулта чаплă тырпул туса илчĕç, гектартан 100 пăта йахăн тухрĕ. (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Çакăн пек тырпула пирĕн Чăваш республикĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем стахановла ĕçленипе туса илчĕç. Тырпул тухăçлăхĕ тĕлĕшпе епĕр 1937 çулта Совет Сойузĕнче пĕрремĕш вырăна тухрăмăр. (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Пирĕн, çак сльота пуçтарăннисен пурин задачи вăл акă мĕнре пулать: малта пыракансем иртнĕ çулта вăйлă тырпулшăн кĕрешсе пухнă опыта тĕплĕн пăхса тухмала, вăл пуйан опыта мĕн пур колхозсене, мĕн пур колхозниксемпе колхозницăсене памала та, çав опыт тăрăх 1938 çулта пысăк тухăçлă тырпулшăн кĕрешнĕ çĕрте позицисене алăран вĕçертмеле мар, çĕнĕрен тата пысăкрах çитĕнÿсем кĕрешсе илмеле. (Алă çупаççĕ).

1937 çулхи çитĕнÿсем вĕсем пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем калама çук тăрăшса ĕçленипе пулнă, вăл—пирĕн правителствă калама çук пысăккăн пулăшнине резулътачĕ. Револьуци хыççăнхи çулсенче, икĕ сталинла пйатилеткăсен çулĕсенче пирĕн республикăри колхозсем партипе правителствăран пирĕн аслă Сталинран пит пысăк пулăшу илчĕç (Алă çупаççĕ, Сталин йулташа чысласа саламласа кăшкăраççĕ, оркестр, „Интернационал“ выльать).

Партипе правителствă пире, Чăваш республикĕнчи колхозсене, пит нумай машинăсем парса пулăшрĕç, çакна пула пирĕн йалхуçалăхĕнчи ĕç, пирĕн çĕр çинчи ĕç пачах урăхла пулса тăнĕ. Йалхуçалăхĕнчи кирек мĕнле ĕç те хаљ—суха-и вăл, ака-и, тырпула пухса кĕртни-и, авăн çапни-и—пурне те хаљ тĕпрен илсен йалхуçалăхĕнчи кăткăс машинăсемпе тăваççĕ. Партипе правителствă пире иртнĕ çулсенче, уйрăмах иртнĕ 1937 çулта паха вăрлăхсем парса пысăккăн пулăшрĕç. Партипе правителствă пирĕн Чăваш республикĕнчи колхозсене социалисăмлă ăмăрту организацилес тĕлĕшпе организацилĕ пысăк пулăшу пачĕç, агрономсем парса, агротехникăна организацилекен руководителсем парса пысăккăн пулăшрĕç.

Пирĕн партипе правителствă Чăваш республикĕнчи колхозсене çакăн пек пулăшу панăран ĕнтĕ епĕр гектартан 100 пăта йахăнах тырпул туса илме пултартăмăр. (Алă çупаççĕ).

Çак пулăшупа усă курса пирĕн республикăри колхозниксем иртнĕ çулта вăйлăн ĕçлерĕç. Мĕншĕн ĕçлес мар-ха! Вĕт, пирĕн çĕршывра рабочисем хăйсем, хресченсем хăйсем хуçа пулса тăраççĕ. Пирĕн çĕршывра капиталиссем çук, çĕрулпучĕсемпе кулаксем çук, буржуалă çĕршывсенчи пек рабочи класа пусмăрласа експлоатацилекен харам пырсем çук, буржуалă çĕршывсенчи пек рабочисемпе хресченсен ĕнси çинче ларакан харампырла классем çук, пирĕн патăрта вĕсене пĕтерсе хунă. Çавăнпа та пирĕн Совет Сойузĕнче експлоататорсемпе експлоатациленекенсем çук, класлă пусмăрлăх çук.

Пирĕн Совет Сойузĕнче ĕççыннисем хăйсем хăйсен пурнăçне тăваççĕ, металл, машинăсем тата тĕрлĕрен таварсем мĕн чухлĕ ытларах пулаççĕ, колхозниксен тырпул, пахча-çимĕç, çĕрулми, выльăх-чĕрлĕх мĕн чухлĕ ытларах пулать, пирĕн çĕршыв çавăн чухлĕ пуйанрах та хăватлăрах пулать, рабочисемпе хресченсен пурнăçĕ çавăн чухлĕ лайăхрах, пуйанрах, çутăрах та хаваслăрах пулать. Акă мĕншĕн ĕнтĕ пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем çавăн пек йуратса та тăрăшса ĕçлерĕç. (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Пирĕн ытарайми паха çĕршывра пурăнакан мĕн пур халăхсем хăйсен çĕршывĕн çитĕнÿвĕсене ÿстерсех пырассишĕн пурте пĕрешкел вăйпа тимлĕн ĕçлеççĕ. Пирĕн çĕршыври 175 национальнăçсемпе ăрусем пĕр сойуза пĕрлешрĕç, рабочисемпе хресченсен государствинчи халăхсен ленинла-сталинла пĕр туслăх семйине организацилерĕç.

175 национальнăçсемпе ăрусем тĕрлĕрен чĕлхесемпе калаçаççĕ, ĕлĕк вĕсене погромсем туса, тăшманла хирĕçтерсе пĕр-пĕринчен уйăрса тăнă, хаљ вĕсем пĕр чĕлхе тупрĕç, вăл—пирĕн большевикла парти чĕлхи, Ленин—Сталин чĕлхи. (Алă супаççĕ) Пирĕн çершыври мĕн пур халăхсен пĕр шухăш, пĕр интерес—вĕсем пурте Мускав çине, Кремљ çине пăхса тăраççĕ, унта, Кремљ башнисем çинче, рубин çăлтăрсем уççăн йалтăртатса тăраççĕ, унта пирĕн Совет Правителстви ĕçлет, Унта пирĕн Аслă аттемĕр тата учител, аслă Сталин йулташ ĕçлет. (Нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ, „Аслă Сталина—урра!—тесе кăшкăраççĕ. Оркестр „Интернационал“ выльать).

Ленин—Сталин йалавĕ айĕнче, Аслă Сталинла Конституцине пурнăçа кĕртсе пырса, пирĕн çĕршыври халăхсем пĕтĕм чунтан тăрăшса ĕçлеççĕ. Çавăнпа пирĕн ĕçсем ăнса пыраççĕ, улăп утăмĕсемпе малала кайаççĕ. Анчах та фашисăм агенчĕсем халăхăн ылханлă тăшманĕсем—троцкиссем, бухаринцăсем, буржуалă националиссем пирĕн çĕнтерулĕ çул çинче чăрмантарса пыман пулсан, пирĕн çитĕнÿсем тата ытларах пулмалаччĕ. Совет халăхĕ, больщевикла парти йертсе пынипе, калама çук чаплă чекиссем—Николай Иванович Йежов йертсе пыракан мухтавлă наркомвнудельцăсем пулăшнипе, халăх тăшмансене çĕмĕрсе тăкнă. („Урра“ кăшкăраççĕ, тăвăллăн алă çупаççĕ). Тăшмансем тепле хăтлансан та совет халăхĕ çĕнтерÿлĕн малала пынине никам та нихăçан та чарса лартма пултараймасть. (Алă çупаççĕ).

Епĕр, йулташсем, иртнĕ çитĕнÿсемпе хамăра лăплантарма пултараймастпăр. Пирĕн 1937 çулта пулнă çитĕнÿсем пысăк, епĕр, больщевиксем, совет халăхĕ—урăх халăх, вăл пĕрмайах малала кайать, каймала та, мĕншĕн тесен совет халăхĕ пĕтĕм тĕнчери пролетариатăн ударлă бригади. 1938 çулта, Сталинла виççĕмĕш пйатилеткăн пĕрремĕш çулĕнче, партипе правителствă пирĕн умма тата ответлăрах задачăсем лартрĕç. 1938 çулта пирĕн парти, Сталин йулташ çĕршывра 7—8 мĕлйард пăт тырă илес лозунга пурнăçа кĕртессине татса памалах. (Алă çупаççĕ). Çак задачăна пурнăçлас тесен, тĕрĕссипе каласан, нумайах та кирлĕ мар: 1938 çулта пирĕн Чăваш республикĕнче кашни колхоз çĕр пăтран кайа мар тырпул туса илтĕр. (Алă çупаççĕ). Ку задачă çапах та çăмăл мар, йăвăр задача. Çавăнпа та епĕр Парти Обкомĕ, Халăх Комиссарĕсен Совечĕ, сире çак ыйтусемпе канашласа пăхма, 1938 çулта пирĕн Чăваш республикĕнче 100 пăтран кайа мар тырпул илмен колхоз ан пултăрччĕ тесе канашласа пăхма чĕнтĕмĕр. Епĕр сирĕнтен пире тата Чăваш республикĕнчи пĕтĕм колхозсене, колхозниксене ăс парса пулăшма ыйтатпăр. (Алă çупаççĕ).

Пирĕн 1938 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессине татах та лайăхлатмала. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пирĕн çитменлĕхсем нумай-ха, выльăх-чĕрлĕх продукцийĕ çителĕксĕр вырăнта тăрать. Выльăх-апачĕн никĕсĕ хĕсĕк вырăн пулса тăрать. Çапах та йăвăрлăхсене пĕтерме май пур. Есĕр, йулташсем, пурте темиçе çул хушши хăвăрăн опытсемпе тĕреслесе вăл задачăсене пурнăçа кĕртмели çула тупнă. Çавăнпа та епĕр, республикăри пур колхозсенче те выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малала йама сирĕн шухăшсене итлесшĕн, сирĕн опытсемпе усă курасшăн.

Епĕр сирĕнпе пĕрле 1938 çулта Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкинче пулатпăр. Выставкă кам лайăх ĕçленине, мĕнле республикăсем, облăçсем, крайсем лайăх ĕçленине кăтартса парĕ. Выставкă мĕнле колхозсем тата çынсем социалисăмла йалхуçалăх ĕçĕнче чи паха тĕслĕхсем илнисене кăтартса парĕ, çавăнпа та пирĕн республикăри колхозсемшĕн, мĕн пур колхозниксемпе колхозницăсемшĕн социалисăмла орденлă республикăна йалхуçалăх выставкинче малти вырăна кăларса кăтартасси чыс пулса тăрать. (Алă çупаççĕ).

Епĕр, сирĕнпе пĕрле, йалхуçалăхĕнчи чи лайăх çынсем пухнă опытпа усă курса, çак опыта республикăри мĕн пур колхозсене, районсене пуçарса, пуриншĕн те тивĕçлĕ туса, пĕр пĕринчен вĕренсе пырса, Сталин йулташ вĕрентнĕ пек çанăсене тавăрса ĕçлесе пырса, 1938 çулта тунă результатсем тăрăх парти умĕнче, правителствă умĕнче, Сталин йулташ умĕнче аван ĕçлерĕмĕр, тесе калама пултаратпăр.

Айтăр, йулташсем, 1938 çулта çапла ĕçлетпĕр: Сталин йулташ хамăрăн ĕçсен резулътачĕсем тăрăх—Чăваш республикĕ аван ĕçлерĕ, тесе калатăр. (Нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ).

Пухăннă сльот пуйан опытсене тупса пама тата çак çитĕнÿсене татах та нумайлатма пĕтĕм вăйран тăрăшасса шанатпăр епĕр.

Партин Облăç комитечĕ тата Халăх Комиссарĕсен Совечĕ хушнипе пирĕн Орденлă Чăваш республикĕнчи колхозник-стахановецсен сльотне уçăлнă тесе шутлатăп. (Нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ, пурте ура çине тăраççĕ, оркестр „Интернационал“ выльать).

Мартăн 3-мĕшĕнче Германири коммунисcен партийĕ çулпуçне, Германи рабочи класĕн çулăмлă борецне. фашисла палачсем тĕрмере асаплантарма пуçлани 5 çул çитет. Укерчĕк çинчен: ЕРНСТ ТЕЛЬМАН. Сойузфото репродукцийĕ.

Папанинцăсем ССР Сойузĕн ăслăлăхсен Академинче докладсем тăваççĕ

ССР Сойузĕн ăслăлăхсен Академийĕ папанинцăсене кĕтсе илме вирлĕн хатĕрленет. И. Д. Папанин, П. П. Ширшов, Е. Т. Кренкел тата Й. К. Федоров Мускава таврăнсанах Академи чаплă лару организацилет, унта „Çурçĕр полюсĕ“ станцинче пулнă хăйулă çынсем хăйсен куçса çÿрекен пăр çинче 274 кун хушшинче тунă ĕçĕн ăслăлăх резулътачĕсем çинчен доклатсем туса параççĕ. Кунсăр пуçне папанинцăсен Арктикăри ĕçĕ çинчен йатарласа „Ăслăлăхсен Академийĕн доклачĕсем“ йатлă сборник туса кăлараççĕ.

Папанинцăсем хăйсем тунă доклатсемсĕр пуçне сборникре тата А. Ферсман, А. Д. Архангельский, В. И. Вернадский академиксен статйисене, Й. М. Шокальский, В. В. Шулейкин, В. Й. Визе тата ытти профессорсен статйисене те пичетлеççĕ. Çав статйасене польусра хĕл каçнă тăватă учонăй тунă ăслăлăхлă ĕçсем тăрăх Арктикăпа усă курас ыйтупа çыраççĕ. Сборнике лайăх илемлетсе кăлараççĕ.

(ТАСС).

„Мурманец“ паруссем карса пырать

„ЙЕРМАК“ БОРЧĔ, мартăн 1-ш. (Радио тăрăх, ТАСС-ăн йатарласа кайнă корросподенчĕ). Ĕнер „Йермак“, „Мурманеца“ буксира илнĕскер, Норвеги çыранăсем патнелле хуллен куçса пычĕ. Шторм пулнă пирки 4 сехетлĕ вăхăтра 15—20-шер мил кăна малала кайма май пулчĕ. Пайан 13 сехет те 30 минутра пысăк хум çинче сасартăк хытă туртăннипе буксир татăлса кайрĕ. Хытă хумханнипе çĕнĕрен татăлса кайас хăрушлăха кура, халĕхе çĕнĕрен буксира илес мар терĕмĕр. Хаљ пирĕн çула майăн вăйлă çил вĕрет. „Мурманец“ паруссем карса пырать.

Епĕр 15 сехет тĕлĕнче пыракан вырăн: Çурçĕр широтин 60 градусĕпе 13 минучĕ, хĕвелтухăç долготин 3 градусĕпе 37 минучĕ.

Тройановский.

„Мурманпа“ „Таймырăн“ историлĕ похочĕ вĕçне çитнĕ

МУРМАНСК, февралĕн 28 мĕш. „Мурман“ тата „Таймыр“ карапсен Гренланди тинĕсĕнчи историлĕ похочĕ вĕçне çитнĕ. Февралĕн 28-мĕшĕнче 20 сехет те 30 минутра карапсем Мурманска çитнĕ.

Карапсен екипажĕсене саламлама хулари пиншер ĕççыннисем пынă. „Мурман“ çине ССРС Верховнăй Совет депутачĕ Душенов, партипе совет организацисен руководителĕсем пынă. Унта пулнă митингра „Мурман“ капитанĕ Котцов йулташпа „Таймыр“ капитанĕ Барсуков йулташ сăмах туса калана.

Çурçĕр çар флотĕнчи командирсен, политработниксен, краснофлотцăсен, Мурманск округĕнчи ĕççыннисен йачĕпе „Мурманпа“ „Таймыр“ екипажĕсене Душенов йулташ саламланă.

(ТАСС).

СЛЬОТ ДНЕВНИКĔ

Мартăн 1-мĕшĕ. Ирхи лару

Ирхи лару Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн заместителĕ Свешников йулташ Коротков йулташ тунă доклада чăвашла каласа панипе пуçланчĕ.

Перерыв хыççăн Коротков йулташ „1937-мĕш çулхи йалхуçалăх ĕçĕсен итогĕсем тата 1938-мĕш çулхи задачăсем çинчен“ тунă доклад тăрăх прени пуçланчĕ. Пренире чи малтан Вăрнар районĕнчи Сталин йачĕпе тăракан колхоз председателĕ Жарков йулташ тухса каларĕ. Кун хыççăн Патăрйел районĕнчи „Хĕрлĕ Туçи“ колхоз председателĕ орденоносец Острйаков йулташ тухса каларĕ.

Залăна Улатăрти паравозсем йусакан заводри рабочисен делегацийĕ кĕчĕ. Делегатсем вĕсене тăвăллăн алă çупса кĕтсе илчĕç. Заводри стахановец Петров йулташ хăйсем производствăра çитĕнÿсем туни çинчен каласа пачĕ. Кун хыççăн Куславкка районĕнчи „Динамо“ колхоз председателĕ Чернов, Кувакино МТ Станци директорĕ Бочков, Шăхасан районĕнчи Киров йачĕпе тăракан колхозран килнĕ Степанова тата ытти йулташсем те тухса калаçрĕç.

Ирхи лару хупăнас умĕн Мордва республикинчен килнĕ колхозниксен представителĕ Панишкина йулташ тухса сăмах каларĕ.

Каçхи лару

Перерыв пулнă хыççăн Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ Коротков йулташ тунă доклад тăрăх прени пычĕ. Пренире Тутаркас районĕнчи МТ Станцинчи 4-мĕш бригадăн бригадирĕ Астанкин, орденоносец Куликов (Елĕк р.), Хĕрлĕ Чутай районĕнчи „Малала“ колхоз членĕ Морозова, Шăмăршă районĕнчи „Трийер“ колхозран орденоносец Капчиков, Çĕмĕрле районĕнчи „Красноармеец“ колхозран орденоносец Чекменева, Йельникова йалсовет председателĕ (Сĕнтĕрвăрри р.) Андрейев, Çĕрпÿ районĕнчи „Вучах“ колхоз председателĕ Андрейева, Канаш районĕнчи „Хĕрлĕ Çăлтăр“ колхоз председателĕ Савушкин тата ытти йулташсем те тухса каларĕç.

Каçхи лару пынă вăхăтра сльот делегачĕсене Шупашкар хулинчи килхуçи арăмĕсем, врачсем пырса саламларĕç.

Каçхи лару хупăнас умĕн ССР Сойузĕн Верховнăй Совет депутачĕ—Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ Л. С. Спасов йулташ тухса каларĕ. Ана сльот делегачĕсем тăвăллăн алă çупса кĕтсе илчĕç.

— Тырпул туса илессипе пирĕн республикă Совет Сойузĕнче хисеплĕ вырăн йышăнчĕ,—тет Спасов йулташ. Пирĕн халăх агротехникăна пĕлекен пулса çитрĕ, агротехникăна тĕрĕс пурнăçласа пынипе иртнĕ çулта республикипе илсен вăтам шутпа гектартан 92 пăт тĕштырă илнĕ.

— Парти Обкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ,—тет малала Спасов йулташ,—иртнĕ çулхи ĕç опычĕсене шута илсе, кăçал вăтам шутпа 100 пăтран кайа мар тĕштырă туса илме май пур тесе шутлаççĕ.

Спасов йулташ орденлă Тутар республикипе социалисăмла ăмăртăва тухса ĕçлеме сĕнÿ пачĕ.—Пирĕн хамăрпа йунашар орденлă Тутар республикипе ăмăртса ĕçлеме пур условисем те пур,— тет Спасов йулташ.

Малала вăл çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе халиччен тунă ĕçсем çинчен, малала çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе татах та пысăк ĕçсем тумали çинчен тĕплĕн чарăнса тăчĕ.

Каçхи лару хупăнсан сльот делегачĕсем калаçакан кино-театрта çĕнĕ кино-фильм „Волочаевские дни“ тата пĕр ушкăнĕ академи театрĕнче концерт курчĕç.

Ĕнер Хĕрлĕ плошчĕдре

Мартăн 2-мĕшĕнче, кăнтăрла иртсе 4 сехетре, Чăваш республикинчи вăйлă тырпул маçтăрĕсен—стахановецсен сльочĕ йачĕпе Шупашкарта пысăк митинг пулса иртрĕ.

Митинга ПСК(б)П хула комитет секретарĕ Лапин йулташ уçрĕ.

Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ, ССРС Верховнăй Совет депутачĕ—орденоносец Коротков йулташ хăйĕн сăмахĕнче Чăваш республикĕнчи колхозниксем 1937 çулта вăйлă тырпул туса илес, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе тунă çитĕнÿсем çинче чарăнса тăчĕ.

Митингра Шупашкар хула комитечĕпе хула совечĕ йачĕпе хулари ĕçхалăхĕнчен Золотников йулташ, хулари интеллигенци йачĕпе Харитонов йулташ, рабочи-стахановцăсенчен Пегайева йулташ саламлă сăмахсем каларĕç.

Йалхуçалăх стахановцисен сльочĕ йачĕпе сăмах каласа вăйлă тырпул маçтăрĕ, стахановец, орденоносец Острйаков йулташ тухса каларĕ.

Митинг — „сылтăмла-троцкисла блокăн“ ирсĕр ĕçĕсене сивлесе халăх тăшманĕсене пĕр çын хăварми пĕтерме, 1938 çулта социалисăмла ăмăртăва татах та анлăн сарса ĕçлесе Сталин йулташ çулсерен 7—8 мĕлйард пăт тĕштырă туса илесси çинчен панă лозунга пурнăçа кĕртме чĕнсе резольуци йышăннă хыççăн—хупăнчĕ.

Совет Сойузĕ тăрăх

◆◆ Ставишчанск районĕнчи Станиславчик йалĕнче (Кийев облăçĕ) районри хаçат йалкорĕсем пуçарнипе ССР Сойузĕн историне вĕренмели колхоз кружокĕ организациленĕ. Лекцисене итлеме 30 колхозникпе колхозницă çÿреççĕ.

◆◆ Папанин, Кренкел, Ширшов тата Федоров йулташсене çутçанталăка сăнаса вĕренекенсен Мускаври обществин хисеплĕ членне суйланă. Вăл—пирĕн çĕршыври пит нумайранпа ĕçлекен обществă.

◆◆ „Щорс“ кинофильм вальли чылай вырăнсем ÿкерсе илмешкĕн Чернигова киноработниксен ушкăнĕ пынă. Вĕсем режиссор-орденоносец Довженко йертсе пынипе ĕçлеççĕ. Фильма август уйăхĕ тĕлне ÿкерсе пĕтереççĕ.

◆◆ Аборт тума чарасси тата нумай ачалă амăшĕсене пулăшасси çинчен саккун кăларнă вăхăтран пуçласа хальхи вăхăта çитиччен Сталинград облăçĕнчи нумай ачалă амăшĕсене пурĕ II мĕлйун тенкĕлĕх пулăшу панă.

◆◆ Куйбышев облăçĕнчи колхозсем йулашки çулсем хушшинче 770 автомашинă (грузовиксем) туйанна. Хăшпĕр колхозсем икшер грузовик туйанна.

(ТАСС).

Йалхуçалăх ĕçĕнче малта пыракан стахановецсемпе ударниксен республикăри сљочĕ

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ КОРОТКОВ йулташ тунă доклад*)

Йулташсем! Епĕр кунта йалхуçалăхĕн авангард представителĕсене, колхозсемпе совхозсен ударниксемпе стахановецсене, агрономсене, МТС директорĕсене, выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре малта пыракансене, тракторпа, комбайнпа тулăк курса стахановла ĕçлекен трактористсемпе тракторискăсене, комбайнерсемпе комбайнеркăсене пуçтартăмăр.

Епĕр кунта 1937 çулта тунă çитĕнӳсемпе паллашса, 1938 çулта хамăр умра тăракан задачăсем çинчен сӳтсе йавма [illegible].

Пирĕн стахановецсем 1937 çулта тунă çитĕнӳсем калама çук пысăк. Стахановецсем тунă çитĕнӳсене вĕсен ăнăвĕсене пирĕн масса хушшине анлăн сарма тивĕç. Çав вăхăтрах хамăрăн та массăран вĕренмелле. Етемлĕхĕн генийĕ Сталин йулташ çапла вĕрентет пире. (**Тăвăллăн алă çупаççĕ**).

1937 çулхи тырпул тухăçĕ пирĕн республикăри колхозсем 1937 çулта вăтам шутпа гектартан 15-шер центнер ытла тĕштырă пухрĕç. Чăваш халăхĕн историйĕнче кун пек тырпул нихăçан та пулман. Патша вăхăтĕнче кун пек тырпул тухăçĕ пулма та пултарайман. Коммунистсен партийĕ çирĕп йертсе пыни, колхозсене машинăла техникăпа хĕçпăшаллантарни, стахановла йухăм анлăн сарăлни çапăн пек вăйла тырпул туса илме май пачĕ пире.

Партийĕ правительстви тата Сталин йулташ колхозсене пите пысăк пулăшу пачĕç. 1937 çулта пире государствă 1,5 мелйун пăт тырă, 15300 пăт удобренисем, 312 трактор, 75 комбайн тата 1200 пин тенкелĕх йалхуçалăх машинисем пачĕ. Республикăри уйрăм районсем, уйрăмах Вăрнар, Патăрйел районĕсем, вăтам шутпа кашни гектартан 125-шер пăт тĕштырă пухрĕç.

Уйрăм колхозсем тата та вăйлăрах тырпул туса илнĕ. Сталин йачĕпе тăракан колхоз (Вăрнар р.) акнă пĕтĕм çĕр лаптăкĕ çинчен вăтам шутпа гектартан 180-шар пăт тĕштырă пухрĕ. Çак колхозри уйрăм бригадăсем: Талайев бригади 18 гектар çинчен вăтам шутпа гектартан 324-шар пăт, Храмов бригади 18 гектарлă участка çинчен гектартан 305-шер пăт çурхи тулă туса илчĕç.

Орденоносец Острйаков йертсе пыракан „Хĕрлĕ Туçа“ колхоз (Патăрйел р.) 600 гектар çинчен вăтам шутпа гектартан 160-шар пăт тырпул пухрĕ.

Патăрйел районĕнчи „Çăлтăр“ колхозра (колхоз председателĕ Долгов йулташ) 634 гектар çинчен 150-шар пăт тĕштырă туса илнĕ.

Пелчĕк районĕнчи „Çĕнĕ Ипттерек“ колхоз (колхоз председателĕ Бурмистров) 168 гектар çинчен вăтам шутпа кашни гектартан 155-шер пăт тĕштырă пухнă.

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи „Радио“ колхозра (колхоз председателĕ Храмов) 81 гектар çинчен вăтам шутпа гектартан 140 шер пăт тырпул пухнă.

Ленин йачĕпе тăракан колхозра (Вăрнар р.) кашни гекартан 46,7 центнер махоркă туса илнĕ.

„Çамрăк вăй“ колхозра (Çĕрпӳ р.) Васлйев йертсе пыракан звено 4 гектар çинчен кашни гектартан 8,2 центнер йĕтĕн пухса илнĕ. Мĕн пур йĕтĕн продукцине вăл 15-мĕш номĕрпе государствăна панă.

„Двигатель революции“ колхозра (Пĕпреç р.) Парышев бригади кашни гектартан 28 пăт клевер вăрри туса илнĕ.

Колхозсенчен нумайĕшĕ кашни ĕçкунĕ пуçне 8—9-шар килограм тĕштырă валеçрĕç. Сталин йачĕпе тăракан колхоз (Вăрнар р.) кашни ĕçкунĕ пуçне 13-шер килограм, Вахтеров йачĕпе тăракан колхоз (Тутаркас р.) 15-шер килограм, Ленин йачĕпе тăракан колхоз (Вăрнар р.) 10-шар килограм валеçнĕ. Кун пек колхозсем пирĕн республикăра татах та нумай.

Колхозниксен пуйанлăхĕ ӳссех пырать. Пелчĕк районĕнчи „КИМ“ колхоз членĕ Софронов Николай хăйĕн çемйипе 1000 пăт тырă илчĕ. Çав районтах „Çĕнĕ Иштерек“ колхозри Воробйов йулташ та хăйĕн çемйипе 1000 пăт тĕштырă илчĕ.

Ленин йачĕпе тăракан колхоз членĕ (Вăрнар р.) комсомолец Панфилов, 1100 пăт тĕштырă, 2341 тенкĕ укçан, Патăрйел МТС бригадирĕ Северов йулташ 1000 пăт тĕштырă, 4000 тенкĕ укçан илнĕ.

Сталин йачĕпе тăракан колхоз членĕ Перошин Йефим, ĕлĕк чухăн пурăннăскер, кăçал 900 пăт тĕштырă ĕçлесе илчĕ. Çав колхозрах Сатейев Данил 1000 пăт тырă илчĕ. Сталин йачĕпе тăракан колхозра 200 хуçалăхран 100 хуçалăхĕ 300—400-шер пăт, тепĕр çĕр хуçалăхĕ 400-тен пуçласа 1000 пăт таран тĕштырă илчĕç. Тăлăх арăм Храмова 300 пăт ĕçлесе илчĕ.

Пĕрлешӳлĕ хуçалăхсем туни колхоз членĕсене пит нумай тырпул, пит нумай пахча-çимĕç тума, пит нумай укçа-тенкĕ ĕçлесе илме условисем туса пачĕ. Пирĕн колхозниксем пуйанланнăçемĕн пуйанланса, културăланса пыраççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ пирĕн çĕршыври ĕçхалăхĕ Верховнăй Совет суйланă вăхăтра коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕ çентерчĕ. Çавăнпа декабĕрĕн 12-мĕш историлĕ кунĕнче мĕн пур ĕçхалăхĕ коммунисла партишĕн, пире телейлĕ, савăнăçлă, пуйан пурнăç çулĕпе йертсе пыракан Сталиншăн пĕр çын пек сасăларĕç. (**Алă çупаççĕ**).

Вăйлă тырпул агротехники. Пирĕн колхозсем 1937 çулта çĕнĕ агротехникăна пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе пит пысăк ĕçсем туса иртерчĕç. Республикипе илсен, 1937 ç. колхоз уйĕсене 8.260.000 тонна тислĕк, 1.117.662 тоннă торф кăларнă, 80.702 гектар çине йаровизацилене вăрлăх акнă, 9530 тоннă минераллă çăпахсем тăкнă.

Уйрăм колхозсем (Сталин йачĕпе, Ленин йачĕпе тăракан колхозсем, Вăрнар р.) хăйсен уйĕсене 20-шер пин йушкăн тăпри тăкса çемçетнĕ. Республикипе 518 пин гектар çĕр лаптăкне тракторпа сухаланă.

Çĕнĕ агротехникăна пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе Вăрнар районĕ уйрăмах аван ĕçлерĕ. Нумай колхозсем агротехникăн çĕнĕ катартăвĕсене алла илсе, пурнăçа кĕртрĕç.

Машинă-трактор станцисен ĕçĕсем. Пирĕн МТС-сен тракторĕсем те начар ĕçлемерĕç. Пĕтĕм республикипе илсен, кашни 15 лашалă вăйлĕ тракторпа, çемçе суха çине куçарса шутласан, 693 гектар ĕçленĕ.

Вăрнартипе Пĕпреçри МТС-сем чи аван ĕçлекеннисем пулчĕç. Вăрнарти МТС кашни тракторпа 901 гектар ĕçленĕ, пĕр комбайнпа 212 гектар пухнă, 5,9 процсунтармали йапаласене перекетлесе хăварнă.

Пĕпреçри МТС кашни тракторĕ 892 гектар ĕçленĕ, сунтармалисене те чылай перекетлесе хăварнă.

Пирĕн тракторпа туллин усă курма пĕлекен хăйсен сумне çирĕплетнĕ машинăсене културлă пăхакан пит аван трактористсем çитĕнчĕç.

Патăрйел МТС-чи Северов бригади вăтам шутпа кашни СТЗ маркăлă тракторпа 1700 гектар ĕçленĕ. Çав бригадăри Зимцов йулташ хăй тракторĕпе 1722 гектар, хăй сменинче 876 гектар ĕçленĕ. Çулталăкри нормăна вăл 300 процент тултарнă.

Вăрнар МТС 3-мĕш бригадăри тракторист Панфилов хăй сменинче 718 гектар ĕçленĕ, 2500 килограм сунтармали перекетлесе хăварнă.

Тăвай МТС-чи Кириллова йулташ йертсе пыракан хĕрарăмсен бригади хăйĕн ĕçĕпе пĕтĕм республикипе чи малти вырăн йышăнчĕ, вăл кашни урапалă тракторпа 906 гектар ĕçленĕ.

Пĕпреç МТС-чи комбайнер Шмагин Коммунар маркăлă комбайнпа 311 гектар выраса пуçтарнă.

Кувакинă МТС-чи Горшков комбайнер çула вăхăтĕнче 367 гектар пухнă.

Выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç. 1937 çулта лашасен шутне 1936 çултипе танлаштарсан 1,1 проц., майракалă шултăра выљăхсен шутне 7,6 проц., сурăхсем тăрăх 14,7 процент таран ӳстертĕмĕр. Анчах çакăн пек çитĕнӳсем тунă пулин те, выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç хисепĕ йенчен те, пахалăхĕ йенчен те кайа йулса пырать. Ку ĕçе пирĕн тĕпренех урăхлатмала. Пысăк тухăçлă тырпул туса илес тесен, выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе пурин те тимлĕн çине тăрса тытăнмала.

Пирĕн республикăри колхозсене выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе те малти рете кăларма тăрăшмала. Выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе тивĕçлĕ хак парса, ку ĕçе аван туса тăракан колхозсем халлĕхе пирĕн республикăра сахал-ха.

Çĕрĕç органĕсен ĕçĕсем çинчен. Йулташсем! 1937 çулта епĕр халиччен курман тырпул туса илтĕмĕр, выљăх-чĕрлĕх шутне самайах ӳстертĕмĕр, тракторсемпе ĕçлес плана ытлашшипех пурнăçа кĕртрĕмĕр пулсан, çаксене пурне те епĕр стахановла йухăм сарăлса пынипе тума пултартăмăр. Уйрăмах пирĕн колхозсенче, МТС-ра, совхозсенче хĕрарăмсем лайăх ĕçлерĕç. Хĕрарăм вăл пирĕн шанчăклă тата çирĕп вăй. **Çав вăхăтрах çĕрĕç системи,** кунта йурăхсăр, тăшманла çынсем нисти пек мар нумай пулнă пирки, чăтма çук начар ĕçлесе пынă. Çĕрĕç системинчи халăх тăшманĕсем пирĕн колхозсене, МТС-сене сăтăр туса тăнă.

Епĕр вĕсене çĕрĕç системинчен тымарĕпех кăларса пăрахас тесе, пĕр хĕрхенмесĕр кĕрешетпĕр. Анчах тăшманла, икĕпитлĕ етемсенчен çĕрĕç системинче хĕсĕнсе йулнисем пур-ах. Вĕсем пайан кунччĕнех пирĕн ĕçре чăрмантарма тăрăшаççĕ. Анчах вĕсем пирĕн аларан вĕçерĕнес çук, колхозла хресченĕн хăватлă алли вĕсене пурĕпĕрех лапчăтса, лартĕ. (**Алă çупаççĕ**).

Çĕрĕç халăх комиссариачĕн аппаратне илетĕп. Кунта ĕçсене йури пăтратса пĕтернĕ, ĕç дисциплинине йури аркатса йанă. Çĕрĕç халăх комиссариатĕнче дисциплинăна пăхăнманни, ĕç çине тивĕçлĕ хак парса пăхманни ку таранччĕн те сисĕнет-ха. Аппаратра клас тĕлĕшĕнчен йут тата тĕрĕслемен çынсем пур. Ĕлĕк Çĕрĕç халăх комиссариатĕнче пуç пулса тăнă руководителсем умĕнче çак тăшманла елементсем чаплă та хисеплĕ çынсен шутĕнче тăнă. Çав вăхăтрах тӳрĕ кăмăлпа, ĕçхалăхне парăнса ĕçлекен специалиссем çине кунта никам та çавăрăнса пăхман, вĕсене тĕрлĕ майпа хĕсĕрленĕ, ăнăçлăн ĕçлеме вĕсем валљи условисем туса пама никам та шухăшламан.

Çĕрĕç халăх комиссариачĕн ĕлĕкхи руководителĕсем Василйев, Спиридонов, Михопаркин тата Шулов сăтăрла ĕçсем туса пынă. Чăваш республикĕнчи пĕтĕм çĕрĕç системинче ĕç дисциплинине тĕппипех аркатма тăрăшнă. Вĕсем МТСтанцисенчи тата колхозсенчи кадăрсем хушшинче те дисциплинăна пăсас шутпа ĕçленĕ, вĕсем çакна тума май та тупнă.

МТСтанцисен ĕçĕсене илсен, вĕсен ĕçĕсенче пысăк çитменлĕхсем те пур. Акă, супакан йапаласене перекетлес ыйтăва илер: 1937 çулта государствă пире çунакан йапаласене 9.801.000 тенкелĕх панă. Супакан йапаласене пит перекетлĕ тыткаламала пулнă, анчах пирĕн республикăра, пĕтĕмĕшпе илсен, лигроин 5,8 проц., бензин 45 проц. ытларах тăкакланине куратпăр. Государствăн çак пысăк укçа-тенкине нимĕн йĕркесĕр, сăтăрла тăкакласа урăх çĕре йанă. МТС ĕçĕсене хакланă чухне, МТС плана тултарнипе кăна мар, тата тракторпа ĕçлемели ĕçсене пĕтернĕ хыççăн унăн трактор паркĕ мĕнле тăнине, вăл çунакан йапалана мĕн чухлĕ перекетленине, ĕçĕн хăйне ларакан хакне мĕн чухлĕ йӳнетнине шута илмеле.

Пирĕн Чăваш республикинчи машинăпа трактор станцисем, МТС директорĕсем çунакан йапалана нимĕн йĕркесĕр тăкакланă. Çĕрĕç халăх комиссариачĕн ĕлĕкхи руководстви çак ĕçе йури пăхмасăр тăнă. Сăмахран, Тутаркас районĕнчи МТС-а илер, МТС директорĕ Осипова йулташ тракторпа ĕçлемели ĕçсен планне тултартăмăр, тракторсене йусас ĕçсен планне тултартăмăр, тракторсене йусаса пĕтертĕмĕр, тет. Анчах Осипова йулташ хăй çунакан йапалана нимĕн йĕркесĕр тăкаклани çинчен, пĕтĕмĕшпе шутласан, нормăран 5,2 проц. ытларах тăкаклани çинчен манса кайнă. 30 пичке çунакан йапалана ăçта турттарса кайнине никам та пĕлмест. Йулашкинчен пĕр пайне тупнă, анчах 13 пичке краççин сухалнă сухалнах.

Тутаркасра трактора çунакан йапаласем йарса парасси мĕнле пулнине пăхар-ха. Çунакан йапалан пички тракторпа ĕçленĕ вырăнтан çур километртра, трактористсем çунакан йапала илме кайса пушă çул тăвать. Çунакан йапала патне çитсен, вăл тракторне чарать те, лапчăнса пĕтнĕ витре илет: хăрах аллипе витрине, тепĕр аллипе пичкене тытса витрене çунакан йапала тултарма тытăнать, вунă литр витрене йухать, пĕр литр витре хĕррипе çĕре тăкăнать. Паллах малашне çавăн пек йапалана чăтма çук.

Улатăр МТС-не илер. Вăл çунакан йапалана 9,3 процент ытларах тăкакланă. Пăрачкав МТС 7,9 процент тăкакланă. Пăрачкав МТС-нче пит нумай краççин вăрланă.

Пăрачкав МТС-ĕ пайанхи куна тракторсене йусамали плана 10 процент çеç тултарнă. Çакăн пек йулса пынине ăнлантарса пама йăвăр мар. МТС директорĕ Губин ĕçе йĕркелĕ туса пырас вырăнне, директора тивĕçлĕ мар ĕçсем тума, администрацилеме, трактористсене колхозран кăларассипе хăратма пуçланă. Губин МТС илмели парăмсене илме тăрăшман, трактористсене ĕçукçи тӳлесе татма, трактористсем хушшинче массăлă ĕçе сарса йама, социалисăмла ăмăртăва тивĕçлĕ вырăна хăпартма тăрăшман. Паллах, ĕçе çаксем урлă çеç тӳрлетме май пулнă, анчах вăл йĕркелĕ ĕçлес вырăнне администраторланса кайма пуçланă. Çакăн пирки вара акă мĕн пулса тăнă: вунă пин тенкĕлĕх килнĕ запаслă пайсене икĕ ерне хушши укçа çук тесе. Канашран илсе килеймесĕр, тракторсене йусас ĕçе икĕ ерне хушши чарса тăнă.

Пирĕн МТС-сем халĕ те трактористсем валљи çителĕклĕ лайăх пурнăç условисем туса пама тăрăшмаççĕ. Уйри стансем калама çук йапăх, таса мар, вĕсен тăрĕнчен шыв кайать, унта нимĕнле културăлă ĕç те çук. Трактор станĕсене чăнчăн културăлă центрсем тăвас тесен, çак ыйтăва пирĕн çине тăрсах татса памала.

Канашри МТС-не илер. Канашри МТС намăс курмалах кайа тăрса йулнă. МТС директорĕ Шадрин финанс дисциплинине пăтратса йанă, трактористсене вăхăтра укçа паман, нимĕнле културăлă-массăлă ĕç те туман, çакăн пирки вара МТС кайа тăрса йулнă.

Кивĕ руководствă, паллах, çакăн пек фактсем çинчен пĕлнĕ, анчах вăл государствă пурлăхне салатма йури пулăшса пынă. Машинăсем ирĕкре, йур айĕнче выртнине, комбайн тутăхнине, пăсăлнине епĕр малашне чăтса тăма пултарайма мастпăр.

МТС-сене пынă çĕнĕ руководителсем, çакăн пек ĕçе чăтма çуккине ăнланса, сăтăрçăсен йулашкисене кĕске вăхăтрах пĕтерме вăйа хурса ĕçлемеле.

1938 çулти задачăсем. Пирĕн умра пирĕн республикăри колхозсемпе колхозниксен умĕнче мĕнле задачăсем тăраççĕ? Ман шутпа вĕсем кашнинех паллă. Епĕр кăçал вăйлă тырпул туса илтĕмĕр пулсан, 1938 çулта 1937 çулхинчен сахалтарах тырпул туса илме пирĕн нимĕнле сăлтав та çук. 1938 çулта пирĕн республикăра гектартан 100 пăтран кайа тырпул илекенни пĕр колхоз та пулмала мар. Çанталăк условийĕсем кирек мĕнле пулсан та, çанталăк питĕ йапăх пулсан та пирĕн пысăк тухăçлă тырпул туса илмелех. Малта пыракан колхозсем, стахановла ĕçлекенсен опычĕсем çанталăк кирек мĕнле пулсан та, пирĕн республикăра вăйлă тырпул туса илме май пуррине кăтартаççĕ. Çакна тума акă мĕн кирлĕ:

Чи малтанах пирĕн çĕр ĕçĕнчи çĕнĕ работниксем, МТС директорĕсем, райçĕрĕç пайĕсен пуçлăхĕсем колхозсенчи стахановецсене, колхоз кадрĕсене лайăх пĕлмеле. Кашни колхоз бригадирне, кашни стахановеца, унăн ĕç пултарулăхне, вăл мĕн чухлĕ хавасланса ĕçленине пĕлмеле. Колхозсенчи, совхозсенчи, МТС-сенчи татăтса пĕтереймен тăшмансене тасатмала та, вĕсен вырăнне пултарулă, ĕçе йуратакан çĕнĕ çынсене лартмала.

Хăшпĕр работниксем йенчен иртнĕ çулта вăйлă тырпул туса илнипе лăпланса, халĕ канма йурать тесе шухăшлани палăрать. Ку тĕрĕс мар. Хăшпĕр районсем, сăмахран Пăрачкав, Ишлей, Кувакинă тата Патăрйел районĕсем çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе пур йенчен те намăс курмала кайа йулса пыраççĕ.

Вăйлă тырпул туса илес ĕçри татăклă вырăна вăрлăх йышăнса тăрать. Кашни колхоз председателĕн, бригадирăн, звеноводăн, кашни район руководителĕн чи малтанах таса сортлă вăрлăх ыйтăвне татса хумала. Кăçал пĕтĕм пучахлă тырпула сортлă вăрлăхпа акмала. Çакна тума пирĕн пур майсем те пур. Анчах вăрлăхсене хатĕрлес тĕлĕшпе республикăра ĕç пит йапăх пырать-ха. Улатăр районĕнче суртлă вăрлăха 75 проц., Турхан районĕнче—74 проц., Шăмăршă районĕнче—70 процент, Пăрачкав районĕнче—70 процент таран çеç хатĕрлесе хунă.

Суртлă вăрлăх улăштармали плана 77 процент çеç тултарнă. Пуринчен ытларах çак районсем йулса пыраççĕ: Ишлей районĕ (42 проц.), Пăрачкав районĕ (48 проц.) Кувакинă районĕ (20 проц.), Хĕрлĕ Чутай районĕ (30 проц.). Хăшпĕр районсем, (Тăвай, Çĕрпӳ, Турхан) вăрлăха суртласа тасатас ĕçре те кайа йулса пыраççĕ. Вăрлăха кирлĕ пек тасатас тесен, ăна суртламали машинă витĕр ик-виç хут кăларма тивет. Хăшпĕр районсем трийерсем çителеклĕ мар, теççĕ. Вăл тĕрĕсех мар. Чăваш республикĕнче темĕн чухлĕ ала пур, машинăсем çук çĕрте çав аласене ĕçе йарсан, темĕн чухлĕ вăрлăх тасатма пулать, алапа тасатнă вăрлăх та йапăх пулмасть.

Ахаљ вăрлăха суртлă вăрлăхпа улăштарассине пирĕн чи сывăх вăхăтрах туса çитермеле. Ку ĕçре нимĕнле сăлтав та пулма пултараймасть. Çак ĕçе çуркуннеччĕне хăварни—вăйлă тырпулшăн кĕрешме пăрахнине пĕлтерет.

Пирĕн вăйлă тырпул туса илес тесен, агротехникăла ĕçсене анлăн пурнăçа кĕртмеле. Кашни колхозăн хăйне валљи план тумала. Çак плана колхозник ăнланмаларах тумала. Çак плана тунă çĕре чи лайăх, йалхуçалăх ĕçĕнче опыт пухнă, пуринчен ытларах вăтă колхозниксене йавăçтармала. Çак планра колхоз кашни културăна мĕн чухлĕ, хăш уйа акма шутланине, колхоза мĕн чухлĕ вăрлăх кирлине, мĕн чулĕ вăрлăх уйлăштармалине, колхозра мĕн чухлĕ торф, йушкăн тăпри, минераллă çăпахсем кирлине палăртмала. Çак планрах колхозра миçе плуг, миçе çейăлкă, лаша, çын ĕçлемелине, суракине колхоз миçе кунта туса пĕтермелине кăтартмала.

Пирĕн хăшпĕр колхозсем пĕр-пĕр ĕçе не тăваççĕ те, епĕр нумай турăмăр, çавăн чухлĕ çĕр лаптăкĕнче йур тытса хăвартăмăр тесе кăшкарма пуçлаççĕ. Агротехникăла ĕçсене пĕтĕм комплекспе пурнăçа кĕртмеле. Кунта сухалакан йине тарăнлатни те, удобренисем тăкни те, суртлă вăрлăхпа тата кĕске срукра акни т. ыт. ĕçсем те кĕреççĕ. Сухаланă тăпра хулăмăшне тарăнлатмасан, ăна 20—22 сантиметр хулăмĕшне çитермесен, вăйлă тырпул туса илессине ĕмĕтленме çуккине кашни колхозникăн, кашни бригадирăн, кашни колхоз председателĕн йаланах асра тытмала.

Тракторпа сухалани 20—22 сантиметртан ăшăх ан пултăр. Çакна трактористсен те асра тытас пулать. Лаша турттаракан плугпа сухалани 18 сантиметртан ăшăх пулмала мар.

Çĕре çемçетмелисем. Тырă тунăшне хапартас ĕçре уйа тислĕк, торф, йушкăн тăпри кăларасси пит пысăк вырăн йышăнса тăрать. Хăшĕсем çапла калаççĕ: сурхи тĕштырă акмали çĕр çине пиçсе çитнĕ тислĕке те тăкма йурамасть, вăл писать, теççĕ. Вăл тĕрĕс мар. Çурхи тĕштырă акмали çĕр çине тислĕк тăкма кирлĕ. Хăшĕсем тата торфа çурхи тĕштырă акмали çĕр çине тăкма йурамасть теççĕ. Çавă та тĕрĕс мар. Пиçнĕ торфа тӳрех уйа турттарас пулать, ăна лавăн-лавăн та тăкас пулать. Торф çĕлĕ тунăшне гектартан 2—3 центнер хăпартать. Йушкăн тăпри çинчен çакна каламала: вăл çĕнĕ удобрени. Йушкăн тăпри пирĕн кашни колхозрах, кашни йалтах пур. Вăрнар районĕнчи Ленин йачĕпе тăракан колхоз икĕ çул хушши, пирĕн йушкăн тăпри çук, тесе тăрачĕ. Ĕçе тытăнсан, вĕсем ăна темĕн чухлĕ тупнă, ăна пилĕк çулта та турттарса пĕтерес çук. Йушкăн тăприне тулă акмалли çĕр çине тӳрех кăларса тăкас пулать. Вăл тырă тунăшне кашни гектар пуçне 5—6 центнер хăпартать.

Çавăн пекех государствă паракан минераллă çăпахсене турттарса килессине те организацилемелле. Тислĕк, торф турттарса кăларма тата кĕл пухма государствă панă плана кашни колхозăн чи малтан пурнăçа кĕртмеле. Плана кăна мар, ăна 2—3 хут ытларах тултарас пулать. Мĕншĕн тесен çĕре удобрени ытларах тăкни колхозсене те, колхозниксене те хăйсене усă парать. Колхозниксенчен илнĕ тислĕкшĕн ĕçкунĕ парас пулать, çапла тунипе колхозниксен интересне хăпартатпăр, вĕсене тислĕке тирпейлĕ тытма вĕрентетпĕр.

Анчах хăшпĕр районсем тислĕк, йушкăн тăпри, торф турттарас йенчен пит начар ĕçлеççĕ. Акă, Улатăр районĕ тислĕк кăлармалли плана 40 процент, торф кăлармалли плана 3 процент кăна тултарнă, Патăрйел районĕ торф кăлармалли плана 2 процент, Шăнкăртам районĕ—3 процент. Шăмăршă районĕ—9 процент.

Минераллă çăпахсем—аммиаклă селитрă, аммони сулфачĕ пеккисем—азотлă удобренисенчен чи лайăххисем. Анчах епĕр вĕсене пур колхозсене те çителĕклĕ пама пултараймастпăр-ха, çавăнпа та вĕсемпе пуринчен малтан кĕрхи тулă калчисене апат панă чух усă курмала тата вĕсене чи паха културăсем, калăпăр çурхи тулă, йĕтĕн т. ыт. акакан вырăнсене сапас пулать.

Йаровизаци. Йаровизаци питĕ те пысăк усă пани çинчен каласа ĕнентерме те кирлĕ мар. Кашни колхоз председателĕ, колхозник-бригадир, вĕсем йаровизацилессинĕ йĕркелĕ туса пынă пулсан, вăл ĕçĕн уссине аван пĕлеççĕ. Анчах çапах та пирĕн хăшпĕр çĕрте çав ĕçе йачĕшĕн кăна тăваççĕ, вĕсем вăрлăхсене йĕпеткелеççĕ те, акаççĕ.

Çапла йаровизацилени, паллах, нумай усă памасть, вăл йаровизациленинчен мăшкăлани кăна пулать. Сĕлле, тулăна тата вăрлăх валљи акмали викăна ытларах йаровизацилес пулать. Çавна тума халех çуртсем хатĕрлемеле.

Машинăпа акасси те пит пысăк ĕç. Хăшпĕр районсемпе колхозсем машинăпа акасшăн мар, çейăлкăсем çитмеççĕ, теççĕ. Вăл тĕрĕс мар. Ĕçе лайăх организациленĕ колхозра пĕр çейăлкăпа, калăпăр 11—13 ретли, пĕр кунта 15 гектар акма пулать. Халљ пирĕн пур колхозсенче те çейăлкăсем пур, чи пĕчĕк колхозра та пĕр çейăлкă та пулсан пур. Ыйту кунта епĕр çейăлкăсемпе çителĕклĕ усă курманнинче. Пит кирлĕ машинăсем çине çавăн пек йĕрĕнсе пăхнине тĕппипех пĕтерес пулать. Ака вăхăтĕнче пĕр çейăлкă та ĕçсĕр тарни пулмала мар.

Вăрлăх участкисĕр пирĕн пĕр колхоз та пулмала мар. Вăрлăх участкисем валљи чи аван вырăн хăвармала. Çĕре çемçетмелисене—тислĕксене, йушкăн тăприне, минераллă çăпахсене чи малтанах вăрлăх участкисем çине кăлармала, вăл вырăнсем çинче агротехникă кăтартăвĕсем тăрăх ĕçлесе, алăпа суйласа тасатнă вăрлăх акмала, тулă вăрлăхне, вутпуççи ан пултăр тесе, обйазательнă вĕри шыв çинче чӳкемеле. Вăрлăх участкин лаптăкĕ колхоз хăйне валљи вăрлăх çитмелех пулмала. Çав ĕçе колхоз председателĕсен, районри агрономсен хăйсем çине, хăйсен аллине илмеле.

Кадăрсем тата ĕçе организацилесси. Халăха çĕклес тесен, пĕр-пĕр ĕçе пурнăçа кĕртес тесен, пĕтĕм халăха хутшăнтарас тесен, ун çинчен халăха ăнлантарса парас пулать. Çак тĕлĕшпе колхозниксене вĕрентес ĕçе çирĕп тытăнас пулать. Агротехникăна вĕренмелли курсĕсем тата кружоксем организацилес пулать. Çав курсенче йе кружоксенче чи малтан акакансене, сухалакансене, йаровизаторсене те, химизаторсене те курссенчен вĕрентсе кăларас пулать, колхозниксене агротехникăн чи кирлĕ правилисемпе паллаштарас пулать. Колхозник-çамрăксем çакна ăнланса илчĕр: мĕншĕн 8 сантиметр тарăнăш мар, 20 сантиметр тарăнăш сухалама кирлĕ, кĕрхи çĕртме тунă çĕрсене мĕнле сухаласа хатĕрлемеле. Колхозник торф мĕн панине, унта мĕн чухлĕ азот, фосфорит пуррине пĕлтĕр, йушкăн тăпри мĕнле усă панине пĕлтĕр, йаровизаци туни мĕншĕн кирлине пĕлтĕр т. ыт. те. Çав тĕлĕшпе агрономсен колхозниксене йалан пулăшса пымала.

Пирĕн хăш чухне суракине лашасем çитмен пирки мар, çителĕклĕ хатĕрленмен, ĕçе тĕрĕс организацилемен пирки тăваççĕ. Суракине ĕçе лайăх организацилес тесен, колхозниксене, лашасене пĕр вырăнтан теприн вырăнта куçармала ан пултăр тесен, малтанах план çинчен тĕплĕн шухăшласа пăхмала, колхозăн мĕн чухлĕ акмала, акара миçе лаша ĕçлеме пултарать тата ытти тĕлĕшпе кашни бригадăн план пултăр, кашни колхозник мĕн тумалине пĕлтĕр.

Пирĕн хăш чухне акара ĕçе организацилессине тĕрĕс тумаççĕ: йе икĕ плугпа сухалаççĕ, çейăлки курăнмасть, йе 4 плугпа сухалаççĕ, сӳресем курăнмаççĕ, йе сӳресемпе сӳрелеççĕ, плугсем курăнмаççĕ. Акă ĕçе организацилес тесен, лайăх тусе епĕр акана çĕр пиçсе çитсен тухнине, плуг хыççăн сӳре, тата çейăлкă пыни не калатпăр, ĕç конвейерла пулса пытăр, вара ĕç ăнăçулă пулать.

Суракине иртерме шанчăклă çынсене суйласа лартмала, акакансенчен, сухалакансенчен, звеноводсенчен, бригадирсенчен пуçласа председателе çитиччĕнех тĕрĕслесе суйлана çынсене лартмала.

Ĕç нормисене вăхăтра туса хатĕрлес пулать, колхозниксем çав нормăсене пĕлччĕр. Пирĕн час-часах колхозниксем хăйсен ĕç нормисене пĕлмеççĕ, çав нормăсене канцеларинче вăрттăн тăваççĕ. Нормăсене колхозниксемпе пĕрле тăвас пулать, вара вĕсем ĕç нормисене пĕлсе тăрĕç. Çейăлкăпа тата тырă пуçтармали машинăсемпе ĕçленĕшĕн нормăна прогрессивлă тӳлеме те тăвас пулать. Çапла туни колхозниксене ĕçлеме интереслентерет, вĕсене ĕç тухăçлăхне хăпартма пулăшать.

Лашасем. Суракине ăнăçулă иртерме лашасене лайăх хатĕрлемеле. Лайăх председател, колхозри лайăх хоçайственник сураки валљи малтанах тырă, лаша апачĕ хатĕрлесе хурать. Çураки вăхăтĕнче 6—7 кун хушшинче лашасене пама сĕлĕ уйăрса хунă пулмасть, акана тухиччен те лашасене лайăхрах пăхса çитерес пулать. Йалхуçалăхĕнче лаша халљ те ĕçлекен тĕп вăй пулса тăрать. Пирĕн çакăн пек колхозсем пур: вĕсем, çураки валљи лашасене çитерме йатарласах сăкăр пĕçерсе хатĕрлеççĕ. Çапла туни пит лайăх, çавă вăл пирĕншĕн хаклă тăрать.

Хăшпĕр колхозсенче лаша кӳлмели хатĕрсем пит йапăх йе çителĕклĕ мар. Колхозра 100 лаша, хăмăтсем 20—30 лаша валљи кăна. Лаша таврашĕ çук çĕрте паллах, нимĕнле йĕрке те пулма пултараймасть. Çав ĕçе çитес кунсенчех тӳрлетес пулать. Пур колхозниксене те ăнлантарса парас пулать—вĕсем хăйсем киле илсе кайнă хăмăт—йĕвенсене тавăрса паччăр. Лаша таврашсене йусама уйрăм çынсем лартас пулать. Хăмăтсене лайăх йусама, хăмăт пайавĕ йавма, лайăх чĕлпĕр йавма тăкак ытла нумайах кирлĕ мар. Çав хатĕрсене колхозниксене парса çирĕплетес пулать, вĕсем уншăн ответлă пулччăр, вĕсем йапăх лаша таврашĕпе çӳреме пăрахччăр.

Урапасемпе çунасем тĕлĕшĕнчен те ĕç çаплах тăрать. Енĕ Йĕпреç районĕнче Выраç Темйаш йалĕнче пултăм, унта килкартинче 30 урапа ларать, çав урапасенче пĕтĕмпе те 45 кустăрмач кăна. Урапасене ватса пĕтернĕ, ман умра тата икĕ урапа илсе килчĕç те, вĕсене пăрахса хăварчĕç. Çакăн пек ĕçсенче колхоза йертсе пыраканĕсем айăплă. Пирĕн Чăваш республикинче вăрман сахал мар, турта хуçăлса кайсан, ăна колхозник хăйех тума пултарать. Унта нимĕнле мастерской та кирлĕ мар. Хуçалăха çапла йĕркесĕр тытнине пирĕн пĕтерес пулать. Хуçалăха çапла йапăх тытни те вăл хăй йенчен тăшман ĕçĕ пулать.


Машинă-тракторлă станцисен задачисем. Машинă-тракторлă станцисене çĕнĕ йĕркепе финансировани тумала туни партипе правителствă çĕрĕç системине пит пысăк пулăшу парать. Çав йĕрке машинă-тракторлă станцисене укçа-тенкĕ тĕлĕшĕнчен пулнă йăвăрлăхсенчен хăтарать, укçа-тенкĕ тĕлĕшенчен йĕркесĕрлĕхсене пĕтерет. МТС хуçалăхне çирĕплетет çавăнпа машинă-тракторлă станцисен задачи халĕ—хăйсен ĕçĕсене лайăхлатасси.

Базăра çунтармали йапаласене пăхса тăракан çынсене пирĕн тĕрĕслесе тухас пулать. Епĕр çак ĕçе лайăх тытăнсан, трактористсене лайăх ăнлантарса парсан, вĕсем çунтармалисене 5—6 процент мар, 10—12 процент сахалтарах пĕтерĕç. Пур МТС-сенче 1 процент кăна çунтармали сахалтарах пĕтерсен, вăл пире 100 пин тенкĕ перекет парать, 10 процент сахалтарах пĕтерсен, вăл мĕлйун тенкĕ ытла перекетлет.

Пирĕн задачă халљ çитес—кунсенчех тракторсене йусаса пĕтересси, ремонт пахалăхне, мотор мĕнлине, поршĕнсене тĕрĕслесе тухасси. Çавăн пекех трактор турттакан инвентаре—плугсене вăхăтра

(Йулашки 3-мĕш страницăра).

* Кĕскетсе пичетлетпĕр.



КОРОТКОВ йулташ доклачĕн йулашки

йусас пулат, плуг тимĕрĕсем йепле тăнипе тĕрĕслес пулат, ҫитес кунсенчех ҫене йăлкăсене йусас пулат, вĕсем мĕнле акнине тĕрĕслесе пăхас пулат. Ҫавсем пурте пысăк ĕҫ.

Тепĕр задачă—МТС-сем ваљљи ҫунтармали йапаласем хатĕрлесе хурасси. Ҫитес кунсенчех вĕсене нефтебазăсенчен илсе кайас пулат. Пирĕн хăшпĕр МТС директорĕсем, сăмахран, Вăрнар, Улатăр Канаш МТС директорĕсем нефтебазăран крассин хăйсем турттармаҫҫĕ, бригадăсене уйăрса панă та, вĕсем нефтебазăран тӳрех хăйсем илсе кайаҫҫĕ. Апла туни ĕҫе дезорганизацилет, ҫунтармалисене тирпейлĕ тытассине пăсат. Пирĕн ҫунтармалисене, МТС-сен базине турттарас пулат, ăна лайăх упрассине организацилес пулат.

Ҫак кунсенчех МТС-сем колхозсенчен илмели парăмсене пуҫтарса пĕтерес пулат, ĕҫлененшĕн колхозсенчен патурăпа илессине, трактористсемпе расчотсем туса ҫитермеле. ССР Сойузĕн Ҫĕрĕҫ Халăх Комиссариачĕ пирĕн республикăна МТС-сем илмели парăмсене пуҫтарма кĕске срок пачĕ, ҫак ĕҫе пирĕн вăйлăн тытăнмала. Пĕтĕмпе пирĕн МТС-сен пуҫтармали парăм 1.360.000 тенкĕ ҫитет.

Выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ыйтусем. Выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ыйту—пирĕн хуҫалăхăн уйăрăлми пайĕ. Халĕ специалистсен, зоотехниксен, выљăх тухтăрĕсен выљăх ĕрчетес ĕҫре халăх тăшманĕсем тунă сăтăрла ĕҫсен йулашкийĕсене пĕтерме вăйлăн ĕҫлес пулат. Пирĕн республикăри вырăнсенче „Хроническая анемия“ текен выљăх чирĕ пур. Ҫав чире малала сарăлма чарас пулат, ăна пĕтерес пулат. Специалистсене епĕр ҫавна тума хушатпăр.

Выљăхсене чуптарас ĕҫе иртерме халех тытăнмала. Аҫа выљăхсене пурне те тĕрĕслесе тухмала, вĕсен спермине йурăхлине сăнаса пăхмала, производительсем ҫитмен вырăнсене вĕсене урăх вырăнсенчен илсе килмеле.

Выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕҫе малала ӳстерсе пырас тесен, выљăх апачĕ ҫинчен пуш сăмах ҫапатарса пурăнассине пăрахмала, выљăх апачĕ ыйтăвĕ тĕлĕшпе чăнласах ĕҫе тытăнмала.

Клевер акас ĕҫе илсен, Чăваш республики клевер акмали плана ҫултан ҫула тултараймасăр пынă. Клевер тухăҫĕ те пит сахал, хăшпĕр колхозсем клевера халиччен пăхса ӳстерме вĕренсе ҫитеймен. Кăҫал пирĕн пурĕ 55 пин гектар клевер акмала. Ҫав плана тултармалах. Клевер уйне пăхса ӳстерес ĕҫе те нумай йĕркелемеле, клевер уйне ҫемҫетмеле, ҫумкурăксене вăхăтра ҫумласа тăмала.

Кунсăр пуҫне пирĕн колхозсем сĕткенлĕ апатсем—выљăх кăшманĕпе турнепс тĕлĕшпе те кирлĕ пек ĕҫлемеҫҫĕ. Ҫав кулљтурăсене акса тăвас ĕҫе кирлĕ пек тытăнсан, епĕр вара колхоз выљăхĕ ваљљи ҫеҫ мар, колхозниксен выљăхĕ ваљљи те апат ҫителĕклĕ тунă пулăттăмăр. Ҫав кулљтурăсен вăрлăхне, уйрăмăнах клевер вăрлăхне халех хатĕрлесе хумала. Клевер вăрлăхне хаљ епĕр кирлинчен мĕн пурĕ те 79 процент ҫеҫ хатĕрлесе хунă. Ҫав тĕлĕшпе хаљ пирĕн Кувакинă, Улатăр, Шăмăршă, Патăрйел районĕсем пит йапăх ĕҫлесе пыраҫҫĕ.

Епĕр ҫĕрулми тухăҫĕ йеҫĕпе те мухтанма пултараймастпăр. Ҫĕрулми тухăҫĕ пирĕн сахал-ха. Вăл чи малтанах епĕр ҫĕрулми лартмали вырăна йапăх сухаласа ĕҫлениччен килет, ăшăх сухалатпăр, кирлĕ пек купаламастпăр, вăхăтра ҫумкурăксене ҫумламастпăр. Ҫав йăлана малашне пирĕн пĕтермеле, ҫĕрулми тухăҫне пирĕн гектартан 150 центнертан кайа мар илмеле.

Коллективизаци ыйтăвĕсем. Йулашкинчен епĕ сире коллективизаци ыйтăвĕ ҫинчен асăрхаттарасшăн. Ҫав ĕҫ тĕлĕшпе пирĕн районсенчи работниксем ĕҫлеме пăрахнă.

Пирĕн умра пысăк ĕҫсем тăраҫҫĕ. Ҫураки вăхăчĕ нумайах йулмарĕ, ҫак кĕске вăхăтра пирĕн темĕн пек пысăк ĕҫ тумала. Пĕр ĕҫрен тепĕр ĕҫе сиксе ӳкмеле мар, пирĕн план тăрăх ĕҫлемеле. Пирĕн хăшпĕр йулташсем: епĕр ҫĕнĕ работниксем, епĕр ĕҫе ҫителĕклĕ пĕлсе ҫитеймен, тесе тӳрре тухма тăрăшаҫҫĕ, ку тĕлĕшпе пимĕнле скидкă та пулма пултараймаст. Пайан вăл ĕҫе ларнă, пайан вăл ҫĕнĕ работник, ыран унăн кивĕ работник пекех ĕҫе пĕлсе ҫитмеле. Пирĕн хаљ ҫĕрĕҫ системинче тимĕр пек ҫирĕп дисциплинă пулмала. Авторитетлă пуласси, Молотов йулташ каланă пек, епĕр йепле ĕҫлениччен килет. Епĕр хамăр умра тăракан задачăсене татса парса пурнăҫа кĕртсен, авторитет пирĕнпе пулĕ, ҫĕнтерӳ пирĕнпе пулĕ. Епĕр ҫавна тăвăпăр, мĕншĕн тесен пире коммунисла партипе Сталин йулташ ӳстерчĕ, вĕрентрĕ. Епĕр хамăрăн пĕтĕм вăйа, пĕтĕм хастарлăха хурса ĕҫлĕпĕр, партипе халăх пире шанса лартнипе, куллен массăсемпе ҫыхăну тытса ĕҫлесе хамăр задачăсене ĕҫе кĕртĕпĕр.

Йулташсем! Пирĕн ҫĕнтерӳсем епĕр массăсемпе мĕн чул ҫĕкленниччен, ҫав массăсен темĕн пек пысăк тимлĕхне, вĕсен хавасăлăхне мĕн чул ҫĕклениччен килеҫҫĕ. Тимлĕх халĕ халăхăн пит пысăк, колхозсенче халĕ резерв нумай, пирĕн вĕсене хускатмала. Ҫавна тума пирĕн пуринчен ытла, чăн-чăн социалисăмла ăмăрту пуҫарса йамала. Ăна пĕтĕм халăх ăмăртăвĕ тумала. Сталин йулташ пуҫарнипе Мускавра кăҫал Пĕтĕм Сойузри йалхуҫалăх выставки уҫăлат. Ҫав выставкăра малта пыракан колхозсемпе совхозсен республикăра тунă ҫитĕнӳвĕ кăтартса памала. Анчах та, ҫав выставкăна хатĕрленес ĕҫе илсен, республикăра вăл хаљ пит ҫителĕксĕр пырат. Пĕтĕмпе 1688 колхозран мĕн пурĕ те 596 колхоз ҫеҫ выставкăра пулма зайавлени панă. Выставкăра пирĕн пĕтĕм республикипе пулмала. Пирĕн камсене тата мĕн кăтартмали пур. Выставкăра пирĕн хамăрăн пысăк ӳсĕмĕсене кăтартмала, орденлă Чăваш республикин ҫитĕнӳвĕсене пирĕн тăван ҫĕршывра пурăнакан пĕтĕм халăх куртăр. Пĕтĕм Сойузри йалхуҫалăх выставкинче пулман колхоз пирĕн пĕре те пулмала мар.

Выставкăна хатĕрленес ĕҫ пирĕн пуринчен ытларах йалхуҫалăхĕнче малта пыракансене—стахановецсене, опытниксене кăтартас йенĕпе йапăх пырат. Выставкăра пулма кирлĕ материалсене пит йапăх йĕркелеҫҫĕ. Специалистсен — агрономсен, зоотехниксен ҫав ĕҫе тивĕҫлипе хутшăнмала, вĕсен хăйсен те выставкăра пулма тивĕҫ илме тăрăшмала. Йалхуҫалăх выставкине хатĕрленипе колхозниксен массине малала татах та ҫĕклентерессине, социалисăмла ăмăртăва пĕтĕм халăха хутшăнтармала тăвассинче усă курмала. Йалхуҫалăхĕнче малта пыракан ҫынсене пирĕн пулăшас пулат. Ҫак сљота килнĕ 850 йулташсем, ҫав чи паха ҫынсем, киле таврăнсан, социалисăмла ăмăртăва кирлĕ пек организацилесе, хастарлăн ĕҫе тытăнĕҫ тесе, епĕ пĕтĕмпех шанса тăратăп. Ҫавна пирĕнтен коммунисла парти кĕтет, ҫавна пирĕнтен Сталин йулташ кĕтет. Епĕр, ҫĕрĕҫ системин руководствине лартнă ҫамрăк работниксем, халăх хушшинчи пур талантсене те хăпартса, епĕр халăха вăйлă тырпул тăвассишĕн кĕрешĕве ҫĕклĕпĕр! **(Тăвăллăн алă ҫупаҫҫĕ).**

Фойере

Тухса каланисене пĕр сехет ытларах итлесе ларнă хыҫҫăн сљот делегачĕсем канма фойене тухрĕҫ. Делегатсем пĕр ушкăнĕ Чăвашсен радиостанцийĕ паракан концерта итлесе тăрат. Хăшĕсем тата фанер хăмисем ҫине ҫырса хунă уйрăм колхозсен, бригадăсен, МТСтанцисен, рекордлă тырпул маҫтăрĕсен паха кăтартăвĕсене пăхса ҫӳреҫҫĕ. Кунта ҫырса хунă ҫĕнтерӳлĕ цифрсене хăйсен блок-ночĕсем ҫине ҫырса илеҫҫĕ.

Делегатсем перерыв вăхăтĕнче те хăйсен ĕҫри пысăк опычĕсем ҫинчен пĕрне пĕри каласа параҫҫĕ. Ĕҫлĕх тата йулташла калаҫу пырат кунта.—Епĕр хамăр тракторсене тĕплĕн йусаса хатĕрлерĕмĕр, кăҫал вĕсемпе иртнĕ ҫулхинчен те лайăхрах ĕҫлеме пултаратпăр. Йалхуҫалăхĕнче малта пыракансен республикăри сљотне хам бригадăри лайăх трактористь Карамаликов йулташпа килтĕмĕр. Пурĕ пирĕн районтан 31 делегат килнĕ,—тет Йелчĕк районĕнчи МТСтанцинчи трактор бригадин бригадирĕ орденоносец Д. П. Павлов йулташ.

— Йалхуҫалăхĕнче малашне татах та кăтартулă йертсе пыма Маркс—Енгелс Ленин—Сталин вĕрентӳвĕсемпе хĕҫпăшалланса тухатăп. Паллах вĕренме ҫăмăл мар, занятисене хатĕрленнĕ чухне 60—70-шер страницă вуласа тухма тивет. Ҫавăнпа ĕнтĕ пĕлӳлĕ пулатăп. Пур предметсемпе те „отлично“ вĕренсе пыратăп,—тет Чăвашсен Коммунисла Аслă йалхуҫалăх шкулĕн отличникĕ орденоносец Табаков йулташ.

— Колхозра та вĕренсех пыратпăр,—тет Турхан районĕнчи „Октябрь“ колхоз председателĕ Зеленов Степан.— Пирĕн колхозра кăҫалччен кадрсене ҫине тăрса вĕрентмен пулнă. Правлени членĕсене тата бригадирсене ваљљи йатарласа агрокружок организацилерĕмĕр. Унта пурĕ 18 ҫын вĕренеҫҫĕ. Кадрсене вĕрентсе хатĕрлес ĕҫе ҫине тăрса тытăнтăмăр.

„Октябрь“ колхозра иртнĕ ҫулта вăтам шутпа 17,6 центнер тĕш тырă туса илнĕ. Кăҫалхи ҫуракине хатĕрленес шутпа ку вăхăта ҫитсе пысăк ĕҫсем туса ирттернĕ. Колхозăн таварлă сĕт-ҫу фермн пур. Фермă ӳссе, ҫирĕпленсе пырат. Иртнĕ ҫулта фермă 4 пин тенкĕ тупăш панă.—Иртнĕ ҫулхи ĕҫ опычĕсене хисепе илсе кăҫал гектартан 19 центнертан кайа мар тĕштырă тата выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес йенĕпе пысăк ҫитĕнӳ тума пулса Ҫĕнйалти колхозпа соцьиалисăмла ăмăртăва тухрăмăр,—тет Зеленов йулташ.

Ҫакăн пек иртеҫҫĕ сљот делегачĕсен кану вăхăчĕсем. Кану вăхăтĕнче те ĕҫ ҫинчен, тунă ӳсĕмсем ҫинчен калаҫу пырат.

Т. М-В.

Сљотра пулма тивĕҫ илнĕ стахановецсем

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи республикăра малта пыракан стахановецсемпе ударниксен сљотĕнче районта малта пыракан колхозсен чи лайăх ĕҫлекен колхозник-стахановецисем пулчĕҫ.

Акă, Ускассинчи Сталин йачĕпе тăракан колхозри Шиллер стахановец сљотра пулма тивĕҫ илчĕ. Вăл 1935 ҫултанпа уй-хир бригадирĕ пулса ĕҫлет. Унăн бригади районра кашни ҫулленех ытти колхозсенче ытларах тырă туса илнĕ. Ҫак бригадăрах пер гектар ҫинче 12,36 центнер кантăр вăрри илнĕ.

Ăна ĕҫе лайăх организациленĕшĕн тата вăл тăрăшса ĕҫленине кура 7 хутчен премиленĕ. Иртнĕ ҫулта районта лайăх тĕслĕх кăтартнăшăн Республикăри ҫĕрĕҫ халăх комиссариачĕ коҫтум парса премиленĕ.

Халĕ, вăл пуҫарса пынипе колхоз ҫуракине хатĕрленсе ҫитнĕ, ҫавăнпа вăл сљотра пулма тивĕҫлĕ пулчĕ.

Ҫавнашкалах Аксаринăри „Красное этно“ колхоз бригадирĕ Максимов йулташ тăрăшса ĕҫленипе иртнĕ ҫулта 440 ĕҫкунĕ тунă. Унăн бригади те районта Хĕрлĕ хăма ҫине тухнă. Вăл тăрăшса ĕҫленипе, хăйĕн опытлă участки ҫинче гектартан 270 пăт тĕштырă туса илнĕ. Кăҫал ҫак опытлă участкăна татах та пысăклатса, кашни гектартан 300 пăтран кайа мар тĕштырă туса илме обйазателствă илчĕ. Хаљ вăл та сљот делегачĕ пулма тивĕҫ илчĕ.

Чĕнерти „Стрела“ колхозри Петров коњух та сљотра пулма тивĕҫ илнĕ. Вăл 10 лаша пăхат. „Стрела“ колхозĕ кашни ҫуленех государствăна Хĕрлĕ Ҫара йурăхлă лаша ӳстерсе парат. Государствă колхоза 500 тенкĕ укҫа парса премиленĕ.

С. Прокопйев.

Сљот хупăнчĕ

Ĕнер, мартăн 2-мĕшĕнче, пит ҫĕрлене йулса, йалхуҫалăхĕнчи малта пыракансен республикăри сљочĕ хупăнчĕ.

Каҫхи ларура ПСК(б)П Обком секретарĕ Г. И. Иванов йул. сăмах каларĕ.

Сљот 1938 ҫулта вăйлă тырпулшăн ăмăртса ĕҫлеме Тутар тата Мордва республикĕсемпе социалисăмла ăмăрту договорĕ йышăнчĕ. Договора Чăваш АССР, Тутар АССР, Мордва АССР представителĕсем алă пусса ҫирĕплетрĕҫ.

Саранскинче тата Хусанта пухăнакан сљотсене кайма делегаци уйăрчĕ.

Сљот, ҫавăн пекех тата, Мари АССР виҫĕ республикă ăмăрту договорĕ ҫумне хутшăнма килĕшес пулсан, ҫак ыйту тăрăх ĕҫе татса пама республикăри партипе правителствă органĕсене ирĕк парса хăварчĕ.

Ăмăрту арбитăрĕ пулма сљот „Известия“ хаҫатран ыйтма йышăнчĕ.

Кун хыҫҫăн сљот Чăваш республикĕнче пĕтĕм колхозниксемпе колхозницăсене, трактористсене, комбайнерсене 1938 ҫулта вăйлă тырпулшăн кĕрешме чĕнсе каланине йышăнчĕ.

Правителствă, 1937 ҫулта вăйлă тырпулшăн лайăх кĕрешнĕ стахановецсемпе ударниксене наградăсем парса парнелеме йышăннă.

Сљот Сталин йулташ патне йама хатĕрленĕ ҫыру текстне йышăннă хыҫҫăн хупăнчĕ.

Колхозăн пысăк тупăшĕпе савăнатпăр

Пирĕн Совет Сойуз геройĕ Шмидт йулташ йачĕпе тăракан колхоз Неркеч йалĕнчи хресчен хуҫалăхĕсене 98 процент пĕрлештерсе тăрат. Колхоз ҫултан ҫул хуҫалăхпа организацилĕх йенчен ӳссе ҫирĕпленсе пырат. Колхозниксем агрономи ăслăлăхне алла илсе вăйлă тырпул туса илес ĕҫĕн ăстаҫисем пулса пыраҫҫĕ.

Виҫĕ ҫул кайарах пирĕн колхоз пĕр гектар ҫинче вăтамран 60 пăт тырă туса илнĕ пулсан, 1937 ҫулта 105 пăт туса илчĕ. 1937-мĕш ҫулхи вăйлă тырпула вăхăтра пуҫтарса кертсе тупăша валеҫес ĕҫе йанварĕн пĕрремĕш тĕлне туса ҫитертĕмĕр. Кашни колхозник колхозăн пысăк тупăшĕпе пĕтĕм кăмăлтан ҫĕкленсе савăнат. Хăшпĕр колхозниксем 600—700-шер пăт тĕштырă илчĕҫ.

Епĕр хамăр семйепе, 3 ĕҫлесе, 728 пăт тĕштырă тата 237 тенкĕ укҫан илтĕмĕр. Пирĕн семйере 63 ҫулхи ватă колхозник Йевстафйев Лука хăй пĕччен 324 пăт илчĕ. Вăл мĕн пĕчĕкренех ҫынсем патĕнче тарҫăра ĕҫлесе ҫӳренĕ. Колхоза кĕрсе пĕр ҫул хушшинче илнĕ тупăша темиҫе ҫул тата кунĕн-ҫĕрĕн ĕҫлесе те илме пултарайман. Хаљ вăл колхозра мухтавлă коњух, вăл ку ĕҫре 1931-меш ҫултанпа ĕҫлет.

Краснов Семен колхозник хăйĕн семйипе 1000 ĕҫкунĕ ытла тунă; вăл 600 пăт ытла тĕштырă илче. Тракторист Краснов йулташ 300 пăт тĕштырă тата 1500 тенкĕ укҫан илет. Кун пек хуҫалăхсем пирĕн пĕрре кăна мар. Ака мĕн патне илсе пырат ĕнтĕ колхозла пурнăҫ, пĕрлешӳлĕ ĕҫ. Ҫаксем хыҫҫăн колхозниксен пурнăҫĕ мĕнле лайăхланса пыни ҫинчен каламасăрах паллă. Колхозник пуйан та кулљтурăллă пурăнма мĕн кирлĕ, ҫавна илме пултарат. Вăл пĕччен хуҫалăхри пек „ҫĕнĕ тырра“ мĕнле тухасси ҫинчен шухăшламаст.

Иртнĕ ҫулта вăйлă тырпул туса илнипе епĕр лăпланса лармастпăр. Кăҫал татах та вăйлă тырпул туса илессишĕн тăрăшса ĕҫлетпĕр. Ăна тума пирĕн пур условисем те ҫителĕклĕ. Колхозниксен ĕҫлес хастарлăх пысăк, вĕсен политикăллă тата производстври активлăхĕ ӳсрĕ. Пĕр гектартан 150 пăт тĕштырă туса илес ĕмĕтпе епĕр Сталин йулташ йачĕпе тăракан колхозпа социалисăмла ăмăртăва тухрăмăр. Хамăр ҫине илнĕ обйазателствăна ăнăҫлăн пурнăҫласа пыратпăр.

Ҫуракине хатĕрленес ĕҫрте агропланра кăтартнă ĕҫсене пĕтĕмпе тенĕ пекех туса ҫитернĕ те ĕнтĕ. Вăрлăхсем ҫителĕклĕ, тасатса хунă, суртлă вăрлăхсем хатĕр. Пăрҫа вăрлăхне 14 центнер алăпа суйланă. Йалхуҫалăх машинисем йусавлă, ҫĕре ҫемҫетмели имҫамсене кӳрсе килнĕ. Уйа 4300 лав тислĕк, 1730 лав ҫĕрĕк тăпри кăларнă. 250 гектар ҫинче йур тытнă.

Вăйлă тырпул туса илес ĕҫе агротехникăна лайăх пĕлекен ҫынсем татса параҫҫĕ. Ĕҫе тĕплĕн пĕлсе тума йалхуҫалăх ăслăлăхне алла ҫавăрса илнĕ ҫынсене хатĕрлес тĕлĕшпе пĕлтĕр те епĕр сахал мар ĕҫсем турăмăр. Кăҫал та колхозра вăйлă тырпул ăстаҫисен шкулĕ ĕҫлет, вăл шкулта 35 ҫын вĕренет. Колхоз активĕн радио тăрăх заочнă вĕренмели курсне 20 ҫынна йаҫтарнă. Кашни 10 килте пĕрре кулленхи политикăна вĕренсе пымали кружоксем ĕҫлеҫҫĕ.

Колхоз уй-хир ĕҫсене кăна мар, ытти ĕҫсене те лайăх туса пырат. Пирĕн колхозăн хуҫалăх пысăк. Вăл ҫулталăкра 600000 кирпĕч, 80000 черепица туса кăларат. 44 пин тенкĕ тăракан черепицă заводĕ туса лартрăмăр, 4 гектар ҫинче пысăк пĕве пĕвелерĕмĕр, 14 гектар ҫинче сад хурса хăвартăмăр. Хаљ пирĕн колхозăн 42 тĕп кăларса лартмали улма йăвăҫҫи пур, тата 10 кило акса хăварнă. Колхозăн автомашинă, ҫăм тапмали машинă иккĕ, ҫу ҫапакан машинă пĕрре, сысна ферми тата ыт. те.

Колхозла йал ҫĕнĕ кадрсене вĕрентсе ҫитĕнтерчĕ. Колхоза ҫирĕплетес тĕлĕшпе пĕтĕм вăйран тăрăшса ĕҫленĕ колхоз председателĕ Карпов йул. хаљ районĕҫтăвкомра ҫулйĕр пайĕн пуҫлăхĕ пулса ĕҫлет. Мана хама та, виҫĕ ҫул бригадирта ĕҫленĕ хыҫҫăн, колхоз председателне суйларĕҫ. Индӳков йулташа районĕҫтăвком председателĕн заместителĕ пулса ĕҫлеме илчĕҫ. Петрова йулташ—парти райкомĕн инструкторĕ. Пирĕн колхозран 13 трактористь тухнă, 11 учител, врачсем, Хĕрлĕ Ҫар командирĕсем тата ыттисем ӳссе ҫитĕнне.

Ҫитĕнӳсем пысăк. Ҫак ҫитĕнӳсене кам туса панине тата кам йертсе пынипе тунине епĕр лайăх пĕлетпĕр. Епĕ сљот трибунĕ умне тухса ҫак ҫитĕнӳсем ҫинчен каланипе пĕрлех, хамăр колхозри колхозниксен йачĕпе, пуйан та кулљтурăллă пурнăҫ туса паракана, хамăрăн чи йуратнă аслă Сталина чĕререн тав туса саламлатăп.

Сљот делегачĕ
П. Лукийанов.

Патăрйел районĕнчи Шмидт йулташ йачĕпе тăракан колхоз председателĕ.

Агротехникăла ĕҫсен уссине ăнланса ҫитрĕмĕр

Талайев Иван Петрович 6-мĕш ҫул ĕнтĕ Вăрнар районĕнчи Сталин йачĕпе тăракан колхоз бригадирĕ пулса ĕҫлет. Хаљ вăл социалисăмла йалхуҫалăх маҫтăрĕсен республикăри сљот делегачĕ пулса Шупашкара килнĕ. Сљотра вăл хăйĕн бригадипе вăйлă тырпулшăн йепле кĕрешсе пыни ҫинчен каласа парасшăн, хăйĕн опычĕ ҫинчен пĕлтерессшĕн.

Иван Петровичăн мĕн ҫинчен каламали нумай. Унăн бригади иртнĕ ҫулта 35 гектар ҫинчен 29-шар центнер ыраш, 18 гектар ҫинчен 54-шар центнер тата ытти 24 гектар ҫинчен 37-шер центнер сĕлĕ туса илнĕ. Ҫавăн пек вăйлă тухăҫ туса илмели майсем ҫинчен Талайев йулташ ҫапла каласа парат:

— 54-шар центнер илнĕ ҫĕр лаптăкĕ пирĕн 3-мĕш пусура пулнă. Ҫав уйа епĕр кашни гектар ҫине 300-шер лав йӳшкăн тăпри кăларнă, 18 гектар ҫине пурĕ 5400 лав турттарнă. Унсăр пуҫне тата минераллă ҫăнăхсем те сапнă: суперфосфат 2 шер центнер, кали тăварĕ—1 центнер тата кĕл—1 центнер. Агротехникăла ĕҫсенчен ҫаксем пулнă: вăрлăхсене алăпа суртласа йаровизацилесе ретлĕ ҫейăлкăпа акнă. Кĕркунне 1936 ҫулта, паллах, вăл вырăна кĕрсухи туса хăварнă пулнă; сухаласса тарăн, 22 сантиметр тарăнĕш сухаланă. Акас умĕн ҫуркунне тепĕр хут 17—18 сантиметр тарăнĕш илтерсе сухаланă.

— Епĕр,—тет Иван Петрович,—агротехникăна ăнланса ҫитме пуҫларăмăр. Акă, тĕслĕхрен, суперфосфат тырă хăмăлне ҫирĕплетет, кĕл йӳшкăн тăпри ăшĕнчи йӳҫеке пĕтерет. Ҫавна тата агротехникăла ытти ĕҫсене кашни колхозник тĕплĕн ăнланни пире вăйлă тырпул туса илме май пачĕ.

Вăйлă тырпулшăн тăрăшса ĕҫлени ĕҫкунĕсен хакне те нумай ӳстерне. Акă, Ваҫанин Димитри семйи иккĕн ĕҫлесе 65 центер тырă илнĕ. Прошкин Павел, виҫҫĕн ĕҫлесе 100 центнер ытла илнĕ. Талайев бригадинче ĕҫлекен ытти колхозниксем те нумай тырă илнĕ, мĕншĕн тесен унăн бригадинче пурте тăрăшса, пĕр-перинпе килĕшсе йĕркелĕ ĕҫлеҫҫĕ.

Талайевăн 4-мĕш бригади 1938 ҫулта татах та вăйлă тырпул туса илесшĕн.

— 1937 ҫулта вăйлă тырпул туса илни пире лăплантармала мар. Кăҫал епĕр бригадипе вăтам шутпа гектартан 35-шар центнер тĕштырă, уйрăм участкăсем ҫинчен 58—59-шар центнер илме задачă лартнă тет,—Талайев йулташ.

Талайев бригади ҫав задачăна пурнăҫа кĕртессе шанмалах. Вĕсем хаљ ҫуракине хатĕрланес тĕлĕшпе мĕн кирлине пурне те туса ҫитернĕ. Вăрлăхсене 3—4 хут суртласа тасатнă. Ҫĕре ҫемҫетмелисене те нумай хатĕрленĕ. Агротехникăна тата политикăла лару-тăру ҫинчен вĕренессине йĕркеленĕ. Кашни колхозник пĕр-перинпе социалисăмла ăмăртса ĕҫлет.

„РСФСР Верховнăй Советне суйламали Положенине“ вĕренеҫҫĕ

** ВĂРМАР. Аслă Чакри Карл Маркс йачĕпе тăракан колхозра куллен пулса иртекен политикла ыйтусене вĕренмели кружок организациленĕ. Халĕ ҫак кружокра „РСФСР Верховнăй Советне суйламали Положенине“ вĕренме пуҫларĕҫ. Кружокăн 2 хут занати пулса иртрĕ, унта пурĕ 175 ҫын пулчĕ.

В. Андрианов.

** КАНАШ. Механизаци шкулĕн комбайнера вĕренмели уйрамĕнче „РСФСР Верховнăй Советне суйламали Положенине“ вĕрентме 6 кружок организациленĕ. Кружок занатийĕсем ернерĕ 2 хут пулаҫҫĕ. Вĕренекенсен занатисене тăрăшса ҫӳреҫҫĕ.

Гр. Тихонов.

** ИШЛЕЙ. Шетмĕпуҫ йалсоветĕнчи „Ҫĕнĕ хунав“ колхозра кашни бригадăрах „РСФСР Верховнăй Советне суйламали Положенине“ вĕренме кружоксем организациленĕ. Кружоксенче суйлав Положенине „Чăваш Коммунĕ“ хаҫат тăрăх вуласа вĕренеҫҫĕ.

Б. Абрикосов.

Йалти кооперации ĕҫне вăйлатассишĕн

Партипе правителствă хулапа йал хушшинчи таварҫаврăнăшне вăйлатас ĕҫ ҫине йаланах тимлĕн пăхаҫҫĕ. Суту-илӳ ĕҫĕ пĕтĕм Совет Сойузĕнчи пекех, пирĕн Чăваш республикĕнче те, ҫулран ҫул сарăлса пырат. Чăвашсойуз системинчи магазинсемпе ларйоксен шучĕ ӳссе пырат. 1937 ҫул пуҫламĕшĕнче ваккăн суту-илӳ тăвакан магазинсемпе ларйоксен шучĕ 775 пулнă пулсан, 1938 ҫулта пĕтĕмпе 950 шутланаҫҫĕ, пĕр ҫул хушшинчи магазинпа ларйоксен шучĕ ҫĕнĕрен 175 хутшăннă.

Тавар ҫаврăнăшĕ 1937 ҫулта, 1936 ҫулхипе танлаштарсан, 29 процента йахăн ӳснĕ.

Йалти суту-илӳ кулљтурлăхĕ те ҫултан ҫул лайăхланса пырат. Ĕлĕкхи начар, йапăх ларйоксем вырăнне паха, пысăк, таса раймагсем, йалмагсем, кулљтмагсем тăваҫҫĕ.

Республикăра 1937 ҫулта раймагсем—10, йалмагсем 47, кулљтмагсем—10 пулнă.

Пĕрлешӳлĕ апатланас предприйатисен шучĕ те нумайланса пырат. Хаљхи вăхăтра столовăйсемпе ресторансем—38. Вĕсенчен йалсенче 5 ресторан.

Ҫапла пулин те пайанхи куна Чăваш республикĕнчи потребкооперации ҫителĕклĕ ĕҫлет теме ҫук-ха. Таварҫаврăнăш планне ҫулран ҫул, квартăлтан квартăла пурнăҫласа пыраймаст. 1937 ҫулта 150.000 пин тенкĕлĕх тавар сутмала пулнă пулсан, 135.271 пин тенкĕлĕх ҫеҫ сутнă. Виҫҫĕмĕш квартăлта 40 мĕлйун тенкĕлĕх сутмала пулнă пулсан—32 417 пин тенкĕлĕх ҫеҫ сутнă, йе 81 процент. Тăваттăмĕш квартăлта плана 77 процент ҫеҫ пурнăҫланă.

Потребкооперацинче ĕҫлекен хăшпĕр йулташсем кооперации начар ĕҫленине: „промышленнăҫ потребкооперацине ҫамали таварсене памаст“, тесе ăнлантарасшăн. Ку тĕрĕс мар. Тӳрех каламала: иртнĕ ҫулра ҫителĕклĕ пур таварсемпе те кооперации йĕркелĕ суту-илӳ тăваймарĕ. Сăмахран, сахăр сутас плана 86,5 процент ҫеҫ пурнăҫланă, тавар—73 процент, кĕпе супăнĕ—77 процент, махоркă—74 проц., спичкă—82 процент тата ыт. те. Йалсенче, ҫак куллен кирлĕ таварсем пайанхи куна та ҫителĕксĕр. Трак районĕнчи нумай йалсем тавар илме Канашпа Шупашкара йатарласа ҫӳреҫҫĕ. Йетĕрне хулинче кăраҫҫинсăр аптăраҫҫĕ. Ҫакнашкал тĕслĕхсем тата ытти вырăнсенче те нумай тĕл пулма пулат.

Халăх тăшманĕсен сăтăрлă ĕҫĕсен йулашкисене ҫине тăрсах пĕтерес тĕлĕшпе Чăвашсойуз ҫителĕклĕ ĕҫлесе пыраймаст. Халăх тăшманĕсем пайщиксен тивĕҫлĕхне, вĕсем кооперации ĕҫне активлăн хутшăнса куллен контрољ туса пырассине пĕтерсе лартма пăхнă, стахановла тата социалисăмла ăмăрту йухăмне чăрмантарса пынă. Пайщиксенчен уйăрăлса кайнă май, массăлă, обществăлă контрољ ҫуккипе, кооперации организацисен аппарачĕсене тĕрĕсленмен ҫынсем кĕрсе кайнипе потребкооперацин иртнĕ ҫулхи ĕҫĕнче пысăк растратăсемпе, кооперацин пурлăхне ҫаратнисем пулнă.

Ҫак сийенлĕхĕпе, халăх тăшманĕсен сăтăрҫăла ĕҫĕсен йулашкийĕсемпе чăнта бољшевикла кĕрешесси пайанхи кун та ҫителĕклĕн пулса пыраймаст. Растратăсем чакмаҫҫĕ. Ĕҫре тĕрĕсленнĕ, ĕҫлеме пултаракан кадрсене республикăра темĕн чухлех тупма пулат. Ку тĕлĕшпе парти Обкомĕнчен пример илмеле. Ҫапла пулин те Чăвашсойуз ҫĕнĕ кадрсене ĕҫе лартас, вĕсене вĕрентес ĕҫ ҫине тимлĕн пăхмаст. Хăшпĕр кооперации организацисен руководителĕсем—ĕҫлекенсем ҫук, работниксем тупаймастпăр, тесе лараҫҫĕ. Ҫавăнта та ĕнтĕ чылай кооперацисенче малтан растратă тунă ҫынсемех лараҫҫĕ, вĕсене суту-илӳ ĕҫĕнчен тасатас вырăнне тепĕр чухне пĕр ҫĕртен тепĕр ҫĕре куҫарнипе ҫырлахтарма шутлакансем пулнă. Сăмахран, Алтышеври йалпора Баљйаҫников продавец 1937 ҫулта август уйăхĕнче 700 тенкĕ растратă тунă пулин те, йалпо пуҫлăхĕ Леванов ăна ĕҫрех хăварнă, тепĕр уйăхран Баљйаҫников каллех 1.417 тенкĕ растратă тунă. Шăмăршăри йалпо пуҫлăхĕ Калашников столовăйĕнче ĕҫлекен Василйева 313 тенкĕ растратă тунă хыҫҫăн йалпо склачĕн заведуйушчине лартнă, Василйев кунта та 1525 тенкĕ растратă тунă. Кунашкал тĕслĕхсем ытти ҫĕрте те пулнă. Тата ҫакна асăрхаттарса хăвармала: судпа следстви органĕсем растратчиксемпе, кооперации пурлăхне ҫаратакансемпе ҫителĕклĕн кĕрешсе пымаҫҫĕ. Суд тунă растратăна шыраса илмеле туса панă пулин те, вăхăтра шыраса илмеҫҫĕ.

Чăвашсойуз системинче суту илӳ ĕҫĕнче 1937 ҫулта 1200 ҫын ĕҫленĕ, ҫак шутран пĕр ҫул хушшинче тĕрлĕ сăлтавсемпе 608 ҫынна кăларса йанă. Тӳрех каламала: кадрсене воспитани парас ĕҫ, вĕсене куллен пулăшасси ҫителĕклĕ пулман пирки, кунта ĕҫлеме пултаракан кадрсене те ĕҫрен сирни пулнă. Пайанхи куна Чăвашсойуз системинче суту-илӳ отличникĕсем 80 ҫынна йахăн ҫеҫ шутланаҫҫĕ.

Кооперации организацийĕсем суту-илӳ ĕҫĕнчи стахановла ĕҫлесе пыракан йулташсен опычĕсене ҫителĕклĕн ҫутатса, вăл тĕслĕхсем ҫинчен ытти работниксене вĕрентсе пырассине йĕркелемен. Лайăх, отлично ĕҫлекен работниксем темчулах. Иккăвă йалповĕнче Петрова Йевдокийа Йевсейевна (парти кандидачĕ) ĕҫленĕ. Халĕ ăна Шупашкар райсойуз Оргбӳро председателне суйланă.

Кооперации организацисенче отчотпа учот ĕҫне тĕплĕн йĕркелемен, ку йулхавлăхпа халăх тăшманĕсемпе растратчиксем ҫеҫ усă курма пултараҫҫĕ. Ревкомиҫҫисем йĕркелĕ ĕҫлемеҫҫĕ. Кооперацин ĕҫĕсене вăхăтра тĕрĕслесе пымаҫҫĕ.

Совет Сойузĕпе 1938 ҫулта пĕлтерхи таварҫаврăнăшĕпе танлаштарсан, кăҫал йалти суту-илӳ 16 проц. ӳсмеле. Куллен кирлĕ таварсене кăҫалхи ҫул пĕлтĕрхинчен темчулах нумай сутмала. Уйрăмăнах йалта промышленнăҫ таварĕсем сутасси 21 процент ытла ӳсмеле. Потребкооперацисен хаљхи вăхăтри тĕп задачисенчен пĕри вăл—колхозниксене ҫуракине ăнăҫлăн иртерсе йама пулăшасси Тӳрех каламала, ку тĕлĕшпе Райсойузсем ĕҫе тытăнман, ĕҫ хатĕрĕсемпе кирлĕ таварсене илсе килес ĕҫе халех организацилемеле, ҫураки вăхăтĕнче ваккăн суту-илӳ тăвас ĕҫĕн планĕсене халех туса хумала. Пĕтĕм бољшевикла хастарлăхпа потребкооперацин ĕҫне ҫирĕп ура ҫине тăратмала, ăна тума пур условисем те пур.

А. Сымокин.

Франци правителствин тулашри политики

ПАРИЖ, февралĕн 27-мĕш. Палатăра тулашри политикă çинчен пуçласа йанă пренисем ĕнер кунĕпех пычĕ. Палатăри реакцилĕ пайăн лидерĕсенчен пĕри, Фланден, нумайăх пулмасть Берлина кайса килнĕскер, сăмах тухса каланă, ун сăмахĕн шухăшĕ—Германине çĕнĕ уступкăсем пама кирлĕ тени пулнă.

Анчах гитлерла Германи йенчен тухса тăнă хăрушлăх туйăмĕ Францире калама çук пысăк, çавăнпа та халăх фронтне кĕрекен партисен депутачĕсем кăна мар, хăшпĕр сылтăм группăсен депутачĕсем те Фландена хирĕç тухса калаçнă.

Франци алă пусса çирĕплетнĕ договорсене пăхса тухмашкăн никам та ыйтманни ку дискуççире чи паллă пулчĕ,—тет Поль Рейно.

Франци пĕччен мар. Польшăра çакна пĕлсе тăраççĕ: Францине пĕтерсе лартас-мĕн пулсан, Польшăн хăйĕн те пурнăçĕ пĕтнĕ пулĕччĕ. Чехословакин лайăх çарне те шутран кăлартса пăрахма йурамасть. Бельги тĕлĕшпе те çавăн пекех. Антверпенре Германи самольочĕсен базисем сиксе тухас пулсан, Английе мĕскер пулнă пулĕччĕ-ши?

Малала Рейно Гитлерăн Францири тарçисен, Совет Сойузĕн хăватне пĕчĕклетме хăтланаканскерсен, айванла, хирĕçÿлĕ сăмахĕсенчен мăшкăласа кулать. Çак вăхăтра палатăри чылай çынсем Рейно сăмахне саламласа алă çупаççĕ.

Пренисенче çавăн пекех тата Франци премйерĕ Шотан тухса калаçнă. Гавас агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Шотан пуринчен малтан хăй йутçĕршыв ĕçĕсен министерĕпе Дельбоспа йăлтах пĕр шухăшлă пулни çинчен каланă. „Лигă наци татăклăн та хăйулăн ĕçлеменни,—тет Франци премйерĕ,—чылай йăнăçсăр ĕçсем пулнинчен тухса тăнă, анчах Лигă наци халь те мирлĕ пурнăçăн чи лайăх шанчăкĕ пулса тăрать. Франци правителстви Франципе Совет Сойузĕ тунă пакт çине халиччен пекех шанса тăрать, унăн хутне кĕрет. Вăл пакт мĕнле те пулин идеологилĕ доктрина результачĕ мар, вăл йăлтах оборонăшăн кирлĕ, пуриншĕн те уçă факт пулса тăрать, йăна Лигă наци рамкисенчен тухма йăр тунă. Вăл факт мирлĕ пурнăçшăн кĕрешмели хĕçпăшал пулса тăрать. Пирĕн тĕллев—вăрçă пулассине чарса тăрас шутпа мирлĕ пурнăçа йуратакан пур çĕршывсене те пĕр çĕре пĕрлештерсси".

„Кучухнехи проблемăсене татса панă чухне Францийе пĕчĕк çĕршывсене хăйсем тĕллĕн пăрахса хăварас çул çине тĕртекен решенисем йышăнас пулмасть",—тенĕ малала Шотан.

Çĕрле палатă правителствă шанса тăни çинчен калакан резолюци йышăннă. Вăл резолюцишĕн 439 çын сасă панă, хирĕç—2 çын, 170 çын сасă памасăр тытăнса йулнă. Резолюци текстĕнче çапла каланă:

„Правителствă пĕлтернине ырласа, нацилĕ тивĕçлĕхе сыхлас ĕçре, мирлĕ саманашăн тăрассине пурнăçа кĕртсе пырас ĕçре, коллективлă хăрушăсăрлăхпа Лигă наци рамкисенче тунă договорсене хисеплессине пурнăçа кĕртсе пырас ĕçре йăна шанса тăрса, палатă нимĕнле хушусене те йышăнмасть, кун йĕрки çине куçать".

(ТАСС).

Колхозсен ăмăртувĕ

Краснодар крайĕнчи Шчербиновск районĕнчи колхозниксем 1938 çулта чи пысăк тухăçлă тырпул илессишĕн кĕрешме, уй-хир ĕçĕсене кăтартулăн лайăх туса ирттерессишĕн кĕрешме чĕнсе каланине ответлесе, совет çĕршывĕн пур кĕтесĕсенче те колхозниксем анлăн çĕкленчĕç. Шчербиновцăсем хăйсем çине илнĕ обйазателствăсене звеносемпе бригадăсенче, пĕтĕм колхоз пухувĕнче, йалхуçалăхĕнчи стахановецсен çураки умĕн пухăнакан районри тата облаçри канашлăвĕсенче сÿтсе-йавнă.

Краснодар крайĕнчи Славйанскпа Красноармейск районсем пĕрпĕрин хушшинче социалисăмлă ăмăрту договăрĕ тунă. Славйанск районĕнчи колхозниксем кăçалхи çул кашни гектартан 27-шер центнер тулă, сĕлĕпе урпана—28-шар центнер туса илме сăмах панă.

Йалхуçалăхĕнчи стахановцăсен Харьков облаçĕнчи канашлувĕнче пулнисем Харьковшчинăри пур колхозниксене те чĕнсе çыру çырнă. Вĕсем хăйсен чĕнÿвĕнче: малта пыраканнисен опычĕпе анлăн усă курма, 1938 çулта гектартан вăтамран 18—20-шер центнер тĕштырă туса илессине пурнăçа кĕртме чĕннĕ.

Шчербиновскри колхозниксен чĕнÿне Алтай крайĕнчи нумай колхозсем те йарса илнĕ. Унта çуракине чи лайăх хатĕрленессишĕн ăмăртува анлăн сарса йанă. Мурашинск районĕнчи Димитров йачĕпе тăракан колхозпа Радинск районĕнчи Андрейев йачĕпе тăракан колхоз çуракине пур йенчен те хатĕрленсе çитнĕ. Вăрлăхсене пĕтĕмĕшпех тасатса пуçтарса хунă. Уй-хирсене çемçетсе лайăхлатнă. Витесенче тулли ÿт-пÿлĕ лашасем тăраççĕ.

(ТАСС).

Казахстан халăх паттăрĕ çинчен кинофильм кăлараççĕ

Совет Казахстанĕнчи халăхсен йуррисене, халапĕсене Амангелды йачĕ пит те çирĕп кĕрсе вырнаçнă. Казах халăхĕн шанчăклă, ывăлĕ, граждан вăрçин геройĕ Амангелды Иманов тунă геройлă ĕçсен чапĕ Казах республикĕнче çеç мар, унăн тулашĕнче те пит инçете йантраса тăрать.

Çак нацилĕ геройăн сăнарĕ халь ĕнтĕ киноекран çинче чĕрĕлсе тăрать. Амангельды ĕçĕсемпе кĕрешÿвĕсене çутатса паракан картинăна тăвас тĕлĕшпе Ленинградри „Ленфильм" Киностудийĕ колективĕ ĕçлет.

Фильм, большевикла парти лулăшнипе Амангельдыра царисăма, белогвардейцăсене, казах халăхне пусмăрлакан пĕтĕм тăшмансене хирĕç курăйманлăх ÿсĕе çитĕнсе пыни çинчен каласа парать. Граждан вăрçин фрончĕсенче Амангельды хăй тĕллĕн кăтартса парса, джигитсене геройла чаплă ĕçсем тума хавхалантарса çĕкленĕ, Колчакăн тата Алаш-ордыниçăсен бандисене çĕмĕрсе тăкнă.

(ТАСС).

Йапонин кĕçĕн палатă ларувĕнче

ТОКИО, 25-II. (ТАСС). Домей Цусин агентстви çапла пĕлтерет: пайан кĕçĕн палатăн ларувĕ пычĕ. „Пĕтĕм çĕршыва мобилизацилесси çинчен" кăларнă саккун пройекчĕ тăрăх пренисем ĕнерхинчен те çивĕчрех пулнă. Минсейто партин представителĕ Икеда хăйĕн ыйтса каланинче çав саккун пройектне парламента тăратмала тунăшăн правителствăна хытăн критикленĕ, вăл „çĕршыв лару-тăрувĕнче улшăнусем пулни çавна уççăн кăтартса парать: тен, Китай инцидентĕнчен те хăрушлăрах инцидент сиксе тухĕ",—тесе шикленсе пĕлтернĕ. Икеда çапла каланă: „Йапони фашисăмĕ хăйĕн пуçне çĕкленĕ тапхăрта правителствă конституцийе пĕтерсе лар ма хăтланать",—тенĕ вăл.

Вăл правителствă çав саккун пройектне кайала илме ыйтнă. Йутçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Хирота тата çар министрĕ Сугийама пренисенче тухса каланисене ответлесе саккун пройектне йышăнма ыйтнă, Йапонире „малашне хальхинчен те вăйлăрах кризис пулмала",—тенĕ.

Шалти ĕçсен министрĕ Суецугу çапла пĕлтернĕ: „Йапони правителстви халăх интересĕсемшĕн, миршĕн тата йĕркешĕн хăрушă пулса тăракан шухăшсене контроль туса пырĕ",—тенĕ. Çакăнпа пленарлă лару саккун пройектне сÿтсе-йавассине пĕтернĕ, саккун пройектне комиççине памала тунă.

(ТАСС).

9 самольот пĕтнĕ

Ханькоуран пĕлтернĕ тăрăх, Йапони авиацийĕ февралĕн 24-мĕшĕнче Кантон, Чженчжоу, Фучжоу тата ытти хуласем çине тапăнсан, 9 самольот пĕтнĕ. Кантон районĕнчи чукунçул çине бомбă пăрахнă çĕре Йапонин 36 самольот хутшăннă. Вĕсенчен 6-шне китайцăсем персе антарнă. Икĕ самольочĕ Тунцзйан патĕнче (Гуандун провинци) персе аннă. Йапонин тепĕр çăмăл бомбардировщикне Чженчжоура (Хенань провинци) китайцăсен зенитлă артиллерийĕ персе антарнă.

Февралĕн 25-мĕшĕнче Йапони самольочĕсем (пурĕ 59) Наньчан çине (Цзйанси провинцин тĕп хули) пырса тапăннă. Сывлăшра пулнă çапăçура Йапонин 8 самольотне персе антарнă. Йапони самольочĕсем ÿкнĕ вырăна темиçе пин çын пухăннă.

Февралĕн 24 мĕшĕнче Китай самольочĕсен отрйачĕ Синьсань районĕнче (Чженчжуран çурçĕрелле) Йапони чаçĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Китай авиацийĕ Синьсаньри аеродром çине бомбăсем пăраксан, унта Йапонин 4 самольочĕ сийенленнĕ.

(ТАСС)

Чехословакири фашиссем Польшăран пулăшу илессе шанаççĕ

ВАРШАВĂ, 26-II (ТАСС). Польшăн правителствă пичечĕ йулашки вăхăтра тĕнчери лару-тăрура пулса пыракан событисемпе Чехословакине хирĕçле кампанийе вăйлатас ĕçре усă курать. „Експресс поранны" хаçат Чехословакири фашисла партин клерикалсен-автоматистсен государствăна çĕмĕрсе аркатас шутпа туса пыракан ĕçне хавхалантарать. Паллă, ку парти Польшăран пулăшу илсе тăрать. „Експресс поранны" хаçат та Чехословаки пичечĕ: Глинки (клерикалсен-автоматистсен лидерĕ) партийĕ пулăшу илес тĕлĕшпе „Польшă çине шанса тăрать", тесе пĕлтернине комментарисем тумасăрах ĕнентерсе çирĕплетет.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнче строителствă тĕлĕшпе ĕçлекен комитет тунă

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă решени тăрăх строителствă ĕçне лайăхлатас шутпа, стрителствăна нормăлас ĕçе пĕрлĕх кĕртес, çирĕплетнĕ нормăсене ĕçе кĕртсе пынине контроль туса тăрассине пурнăçа кĕртес шутпа, ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнче строителствă тĕлĕшпе ĕçлекен комитет туса хунă. (ТАСС).

Лайăх агитаторсен опытне сармала

ССР Сойузĕн Аслă Советне суйласа ирттернĕ вăхăтра большевикла агитаци кашни совет гражданинĕ патне çитнĕ. Çав вăхăтра агитаципе пропагандă пысăк вырăн йышăннине Трак райкомĕ те, пуçламăш парторганизацисем те лайăх ăнланса илнĕ. Çавăнпа та суйлав кампани вăхăтĕнче агитаципе пропагандă ĕçне коммунисссемсĕр пуçне комсомолецсем 227 çын, партире тăманнисем 500 çын хутшăннă. Вĕсем коммунисссен парти йертсе пынипе Совет çĕршывĕ тунă историлĕ çĕнтерÿсем çинчен, малашнĕ пирĕн мĕншĕн кĕрешмели çинчен халăха ăнлантармала каласа панă. Суйлав кампани партире тăман активиссемпĕн политикăла пысăк шкул пулса тăнă.

Суйлав пулнăран вара икĕ уйăх çурă иртрĕ. Кĕç-вĕç РСФСР Аслă Советне суйламали кампани пуçланать. Агитаципе пропагандă ĕçĕ кутаранхинчен тата вăйлă пулмала. Мĕншĕн тесен, районра суйлав иртнĕ хыççăнах агитаци ĕçĕ чылай вăрахланнă. Парти райкомĕ суйлав кампанин вăхăтĕнче агитаципе пропагандă ĕçĕнче тунă çитĕнÿсене çирĕплетес тĕлĕшпе ĕçлемен. Акă хăшпĕр фактсем: йулашки вăхăтра МТС-че, Крахмал заводĕнче, Ишпикăра, Чатукассинче, Тантăшра, Кăмакалра халăха çĕршыври тата йутçĕршывсенчи ĕçсем çинчен пĕрре те тĕплĕн каласа паман. Суйлав вăхăтĕнче агитатор, вулавçă пулса ĕçленĕ çынсем хăйсен ĕçĕсене тума пăрахнă, райком та вĕсем çинчен манса кайнă. Райком аллинче пур сведенисем тăрăх, вĕсем участкăсенче 92 хутчен агитаторсен семинарĕсене, 3 хутчен инструктивлă канашлусем туса ирттернĕ. Анчах та çак семинарсемпе канашлусем йулашки вăхăтсенче мар, суйлав кампани вăхăтĕнче пулса иртнĕ.

Политикăла агитаци, большевикла тĕрĕслĕх сăмахĕ халăх хушшинче халĕ сахалтарах саралать-ха. Политикăла докладсем тăвасси, тĕрлĕ ыйтусем тăрăх каласусем туса ирттересси, хаçат-журналсем вуласа парасси йулашки вăхăтра чылай колхозсенче кун йĕркинчен тухса ÿкнĕ.

Халĕ çуракине хĕрсе хатĕрленеççĕ. Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ 20 çул тултарчĕ. РСФСР Аслă Советне суйламали Положени пичетленсе тухса халăх хушшине саралнă. Германире, Австрире, Англире политикăла пысăк ĕçсем пулса иртеççĕ. Çак ыйтусем пурте халăха интереслентереççĕ. Агитаторсемпе пропагандиссем умнĕ мĕн çинчен каласа ăнлантармали çинчен халăх хăй конкретлă темă кăларса тăратать. Халăхпа тачă сыхăннă агитаторсем çакна ç̆ийĕнчех тавçăрса илеççĕ. Вĕсен агитаци ĕçĕн темисем пĕр тĕрлĕ çеç мар, политикăла пурнăçпа пĕр тан пыраççĕ.

Именкассинчи „Малала" колхозра Максимова йулташ чылайранпа агитатор пулса ĕçлет. Çавал шывĕ çинче гидроелектростанци строителствинче çĕршер çын ĕçлеççĕ. Максимова йулташ РСФСР Аслă Советне суйламали Положенине илет те, строителства кайать. Вăл малтан суйлав Положенине кам вуласа тухни, кам мĕнле ăнланнине пĕлет. Ку вăхăт тĕлне строителствăри рабочисем нумайĕшĕ суйлав Положени çинчен пĕлмен те. Çакăн хыççăн вăл рабочисене РСФСР Аслă Советне суйламали Положени çинчен ăнлантарса пама тытăннă. Халĕ вăл кашни 2—3 кунта пĕрре строителствăра ĕçлекенсем патне кайса хаçат-журналсенчи чи интереслă статйасене вуласа парать.

Çавăн пекех Кузьмин йулташ та агитаци ĕçне тăрăшса туса пырать. Вăл хăйĕн участкинчи колхозниксем патне килĕсене çÿрет. Киле çÿрени чи малтан ватă старик семпе карчăксене çĕршыври политикăлă ĕçсемпе паллаштарма пулăшать.

Агитаторсенчен пĕри—Медикассинчи суйлав комиççи секретарĕ пулса ĕçленĕ Капитонов йулташăн опычĕ пуриннчен те паха. Вăл хăй куллен ĕçленисĕр пуçне, кашни 10 кунта агитаторсене пухса вĕсен малашне мĕнле ĕçлемелине вĕрентет. Халĕ кунти агитаторсем халăха РСФСР Аслă Советне суйламали Положени çинчен çине тăрса ăнлатараççĕ.

Чукунçул строителствине халăха масс ăлăн ĕçлеме кăларнă чухне агитаци ĕçĕ чылай пулăшнă.

Çапла пулин те халлĕхе Трак районĕнче политкăла агитаци ĕçĕ сÿрĕккĕн пырать. РСФСР Аслă Советне суйлама хатĕрленнĕ май ку ĕç хускании сисĕнет. Анчах та ку ĕçе организацилесе йертсе пыни çителĕксĕр. Ку çакăнтан та лайăх курăнать. 1937—1938 çулсенче курссемпе семинарсенче темиçе çын вĕренсе тухнă. Анчах парти райкомĕ вĕсем ку таранччен мĕн тунине халĕ те пĕрлештерсе тухман, вăхăтран-вăхăта пухса малашне мĕнле ĕçлемелине вĕрентни çук. Лайăх ĕçлекен агитаторсен ĕçĕсем тăрăх ыттисене вĕрентмеççĕ. Кунта райкомпа йунашар „Колхозник" хаçат тухать, вăл агитаторсемпе пропагандиссен ĕçне çутатмасть, вĕсене хаçат ĕçне йавăçтарман.

Р. Шашков.

Конкурс пулса иртрĕ

ЕЛĔК. Февралĕн 19 мĕшĕнче. Елĕк район центрĕнчи культурă çуртĕнче лайăх йурлакансен, ташлакансен, купăс калакансен конкурсĕ пулса иртрĕ. Конкурса чылай çынсем хутшăнчĕç, вĕсем хăйсен пултарулăхне кăтартрĕç.

Конкурса хутшăнса хăйсен пултарулăхĕсене кăтартакан йулташсенчен паллăраххисене 9 çынна укçа парса премилерĕç.

Уйрăмах купăспа лайăх выляканăшăн Йермолайев йулташа 2-мĕш премi, лайăх ташланăшăн А. Тимофейева 2-мĕш преми, Суриков, Миронова, Короткова йулташсене 3-мĕш преми парса премилерĕç. Куракансем конкурса ырлаççĕ.

Ф. Филиппов.

Стахановкăран—сменă маçтăрĕ

ТУРХАН. Липăвкăри аласталăх ертелĕн стружкă цехĕнчи Таньă Воробйова комсомолкă чи лайăх стахановкă шутланать. Вăл сменăри нормăна 150 процент тултарса пырать. Лайăх ĕçленĕшĕн ăна темиçе хутчен те преми панă.

Ертел правленийĕ халь Воробйова йулташа стружкă цехĕнчи сменă маçтăрне лартрĕ. Воробйова йулташ сменăна лайăх йертсе пырать.

А. Покровский.

Вулакансен йышĕ ÿсет

ÇĔМĔРЛЕ („Чăваш Коммунĕ" корр.). Комбинатри библиотекăра вулакансен йышĕ ÿссех пырать. Иртнĕ çулта вĕсен шучĕ 500 çынна йахăн пулнă пулсан, кăçалхи çулăн йанвар уйăх тĕлне 650 çынна çитнĕ.

Библиотекăра пайанхи куна 2014 кĕнеке пур. Кашни кĕнеке вăтамран çулталăкра 28 çын аллине кĕрсе тухать.

Вулакансенчен, уйрăмах рабочисен хисепĕ ытларах шутланать.

Драмкружок ĕçĕ

ЕЛĔК. Чăваш Сорăмĕнчи драмкружок çĕнĕ çул иртнĕренпе чăваш драматургĕсăм çырнă „Анисса" „Йалта" пйесăсене лартса пачĕ. Февралĕн 14-мĕшĕнче Осиповăн „Айтар" драмине выляса кăтартрĕç. „Айтара" курма 400 çын ытла пычĕç.

Н. Терентйев.

Пахчаççен курсĕ

ÇĔРПÿ. Районри колхоз шкулĕ çумĕнче пахчаççен курсĕ уçăлчĕ. Курсра 35 çын вĕренет. Унта сат-пахча ĕçĕ çинчен вĕрентеççĕ.

Н. Окунев.

ШАШКĂ ШАХМĂТ

Шупашкар хулинчи шашкăла выляканссен турнирĕ

Февралĕн 20-мĕшĕнче строителсен клубĕнче Шупашкар хулинчи шашкăла выляканссен турнирĕ пуçланчĕ. Турнирта пĕтĕмпе 14 шашист вылять.

Пĕрремĕш тур февралĕн 20-мĕшĕнче пулса иртрĕ. Унта Борисов Ивановпа вăйă никама пулмала мар турĕ.

Стройтехникумри çамрăк шашист Михайлов Студенецкинчен, Ижейев—Павловран, Андрейев (кооптехникум)—Пошехоновран выляса илчĕç. Поповпа Андрейев партийĕ выляса пĕтермен.

Февралĕн 21-мĕшĕнче иккĕмĕш турта Михайлов Андрейевран (пединститут), Мишуткин—Пошехоновран, Студенецкий Мешковран, Павлов—Андрейевран (кооптехникум), Иванов—Кондратйевран выляса илчĕç. Ижейевпа Борисов вăйăна урăх вăхăта хăварнă.

Иккĕмĕш тур хыççăн Михайлов малта пырать, унăн икĕ очко, ун хыççăн Иванов—1 1/2 очко.

Г. Иванов.

Шкулти шахмăт турнирĕ

ТРАК. Тракри вăтам шкулта малти вырăна тухассишĕн шахмăт турнирĕ пулса иртрĕ. Турнира пĕтĕмпе 10 вĕренекен, икĕ учител хутшăннă. Турнирта 11 очкопа Й. В. Чернов мала тухрĕ. Вĕренекенсем Петухов, Константинов, Кузьмин пурте çичшер очко илнĕ пирки пĕр-пĕрин хушшинче çĕнĕрен выляççĕ. Малашне шахмăт-шашкă турнирĕ пулать.

А. Семенов.

„Петр первый" йалта

ТРАК. Февралĕн 21-мĕшĕнче Мартынкассинчи „Хĕвелтухăç" колхозра „Петр первый" кинокартинă кăтартрĕç. Кинокартинă курма халăх пите нумай пынă. Куракансем унпа пите интересленчĕç.

Н. Йаковлев.

Тÿрлетни

„Чăваш Коммунĕн" 46-мĕш номерĕнче „Тĕрлĕ сăлтавсемпе шанчăксăра кăларнă" йатлă заметкăра „Крылов пиччĕшĕн арăмĕ кулак хĕрĕ пулнă" тенĕ, ăна: „Краснов пиччĕшĕн..." тесе вуламала.

Ответлă редактор ĕçĕсене тăвакан И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Шупашкарти саслă
— кино-театрта —
Мартăн 3-мĕшĕнчен
саслă çĕнĕ фильм
„Волочаевские
ДНИ"
кăтартаççĕ.
программăра-МУЛЬТИПЛИКАЦИЛЕ
кино журнал
„ХРАБРЫЙ
ЗАЯЦ"
Кассă 12 сехетрен уçă.
Сеанссем 6 с., 7 с. 40 м.,
9 с. 20 м. пуçланаççĕ.

Совет çĕршывĕн рисĕ

Революциччен пирĕн çĕршывра рис ĕрчетекен районсем Туркестанпа Кавказлешйенĕ пулса тăнă. Вăтамран гектар пуçне 13 центнертан ытла мар рис туса илнĕ.

Пирĕн çĕршывăн рис хуçалăхĕнче социалисăм строителстви, уйрăмах сталинла пĕрремĕшпе иккĕмĕш пйатилеткăсен çулĕсенче пысăк улшăнусем пулса иртрĕç.

Вăтам Азире тата Кавказлешйенчи районсенчен рис акса туса илесси Инçет-Хĕвелтухăç, Кубань, Украйна тата Атăл тăрăхĕнчи районсене та куçрĕ.

Тинĕс сывăхĕнчи районсем чăннипех те совет рисĕн тĕп вырăнĕ пулса тăраççĕ. Сивве тÿссе иртерĕкен тата хăнăхса çитнĕ рис сорчĕсене халĕ пирĕн Сойузăн нумай облаçĕсенче туса илеççĕ.

Йулăшки çулсенче рис туса илессине çĕнĕ районсене, уйрăмах çурçĕреле куçарасси çине пысăккăн çавăрăнса пăхаççĕ. Сăнаса тĕпчес тĕлĕшпе риса Тутар республикĕнче, Семипалатински облаçра, Павлоградски районра акнă, риса акасси Иртыш тата Ока шывĕсен çыранĕсем патне çитсе, Белоруççи республикне кĕрсе пырать.

Хальхи вăхăтра 11 советлă республикĕсенчен вуннăшĕнче рис акакан çĕр талккишĕсем пур. Рис акăнакан талкишăн çурçĕрти чикки ĕнтĕ Курск облаçĕнчен иртсе Мускав облаçĕ патне çитсе тăчĕ. Рис акакан çĕнĕ районсем çумне халĕ тата Сталинград, Куйбышев, Курск, Рйазань облаçĕсем хутшăнчĕç. Мускав облаçĕнче риса Йахрома районĕнче (Дмитров) акаççĕ, тата Мускав хулинче те рис акăнса ÿсет. Икĕ çул ретĕмех рис Тимирйазев йачĕпе тăракан академи участки çинче ÿссе пиçсе çитнĕ.

Çавăн пекех риса Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкин тĕрлĕ ÿсентăранĕсем хушшинче те тĕл пулма пулать.

Хальхи вăхăтра пирĕн рис акакан районсем 200 ытла, вĕсенче 1000 колхоз, 4 совхоз, 200 МТСтанцисем. Çулран çулах рис акакан çĕр телккишĕ ÿссе пырать, уйрăмах пысăк ÿсĕмсем унăн тухăçлăхне ÿстерессинче. 1937 çулти вăтам тухăçлăх революцичченхинчен икĕ хут ÿссе гектар пуçне 25 центнера çитрĕ.

Казах ССР-чи Кăнтăр-Казахстан тата Кзыл-Орда облаçĕнчи вуншар колхозсемпе МТС-сем иртнĕ çулта гектартан 50 центнер ытла рис пухса илчĕç, вăл облаççенче рис тĕп культурă пулса тăчĕ. Уйрăм колхозсенче рис тухăçлăхĕ гектар пуçне 100 центнера çитет, йе ытлатах та. Кзыл-Орда облаçĕнчи „Майăн 1-мĕшĕ" колхоз, сăмахран, 1937 çулта Пĕтĕм Сойузĕпе рекордлă тухăç—121 центнер рис туса илчĕ.

Туса илнĕ рисăн пĕтĕм хисепĕ 1932 çулта 158 пин тоннă пулнă, 1936 çулта 273,3 пин тоннăна çитиÿсрĕ, 1938 çулта вăл хисепе 405 пин тоннăна çитерме палăртнă.

Рис ĕрчетекен колхозсенче колхозниксем пуйан пурнăçпа пурăнаççĕ. „Азоврис" колхозри (Мариуполь районĕ) колхозник Хан-Ун-Ден йулташ 692 ĕçкунĕшĕн 2629,6 килограм рис тата 4.565 тенкĕ укçа илнĕ. Хăйĕн хуçалăхĕнчен тата вăл 5 300 тенкĕ илнĕ.

1938 çулта пирĕн рис акасси малала аталанса пымала. Гектартан вăтам шутпа 26 центнер туса илме палăртнă. Уйрăм республиксем тата крайсем тăрăх рис акакан кивĕ районсенчи вăтам хисепрен икĕ хут ытларах туса илмеле. Сăмахран, Казах ССР тăрăх гектартан вăтам шутпа 34 центнер, Краснодар крайĕ тăрăх—39 центнер туса илме плана кĕртсе хунă.

Тĕпрен илсен, тухăçлăх ÿсесси çĕре çемçетнипе, акас ĕçсен срокне кĕскетнипе тата лайăх сортлă вăрлăхсем акнипе пулса пымала.

ССР Сойузĕнче рис акас майсем пысăк. Рис акма сăнаса тĕпченĕ çĕр талкишĕ кăна 1 мĕлйун гектара çитет. Рис икма йурăхлă çĕр уйрăмах Вăтам Ази республикĕсенче, Украинара, Кубаньре, Дон çинче тата Атăл тăрăхĕнче нумай.

(ТАСС).

ПĔЛТЕРÿ

1935 çулта майăн 13-мĕшĕнче ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă постановленипе ССР Сойузĕн Финанс Халăх Комиссариачĕн 1937 çулхи декабĕрĕн 27-мĕшĕнчи 686-мĕш №-лĕ директивĕ тăрăх пĕтĕм Чăваш республикĕнчи Халăх Комиссариачĕсен, предпрйатисен, учреждениссен тата ытти организацисен те финанс органĕсенче штатсене, админстрацие управленинче ĕçлекенесен ĕçукçи ставкисене тата администрацие управленин расхучĕсен сметисене регистрацилемеле.

Пур учреждениссемпе предпрйатисен тата организацисен (çав шутрах кооперативлă, общиствăлă организацисен те), вĕсем аслăрах органсене пăхăнса тăраççĕ пулин те регистрацине тăмалах. Сыхлăх Халăх Комиссариачĕпе Шалти Ĕçсен Халăх комиссариачĕ органĕсем тата партипе, профсойуз организацийĕсем урăх йĕркепе регистрацилеççĕ.

Учреждениссемпе предпрйатисене тата тĕрлĕ организацисене регистрацилес йĕрке:

а) Тĕпĕçтăвком, Халăх Комиссарĕсен Совечĕ, Халăх Комиссариачĕсем тата вĕсемпе тан шутлакан республикăри тĕп управленисем—Чăваш АССР Республикин Финанс Халăх Комиссариатĕнче;

б) ытти учреждениссем, предпрйатисем тата организацисем—хăйсен вырăнĕнче хуларипе районри финанс уйрăмĕсенче.

Регистрацине ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1935 çулта майăн 13-мĕшĕнче çирĕплетнĕ пĕр формăлă регистраци картăчкипе çеç тумала.

Учрежденийе, предпрйатийе йе организацийе регистрацилекен руководителĕн регистраци картăчкине 3 екземпльар тултарса алă пусса тата бухгалтера алă пустарса регистрацилекен финанс органне тăратмала. Çавăн пекех тата штатсен расписанипе сметин, администрацийе хуçалăх тытăмĕн расхочĕсен сметин копийĕсене аслăрах органра çирĕплетсе, хăш вăхăтра, кам çирĕплетнине кăтартса иккĕшер екземпльар тăратмала.

Штатсен расписанийĕнче кашни должнăç тăрăх ĕçлекен 1937 çулта финанс органĕсем çирĕплетсе панă тăрăх мĕн чухлĕ ĕçукçи парса тăнине тĕрĕс кăтартмала.

Регистрациленĕ чух Финанс Халăх Комиссариатне йе финанс пайне регистрацилекен органăн ответлă представителĕ пырсан çеç регистрацилеççĕ.

Организацисен ответлă руководителĕсемпе бухгалтерĕсем регистрацинчен пăрăнса йулсан, вĕсене уголовнăй йĕркепе айăплаççĕ.

Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕн заместителĕ Срибный.

„Чăваш коммунĕ" çырăнса илмелли хаксем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 5 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.
Уполномоченный Чувашглавлита № 107 Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 83. Тираж 15.500 58—83 см. 1—1 п. л.

К